14-МĔШ ҪУЛ ТУХАТ̆.

# КАПКĂН

№ 17—18. ДЕКАБĔР. 1938 ç.
„Чăваш Коммунĕ" хаçат кăларат̆.




— Атте, епĕ дневник ҫине шкулта мĕн-мĕн вĕренме панисене ҫырса пыратăп. Есĕ мĕн ҫыратăн?

— Мĕн тери пысăк савăнăҫ пирĕн телейлĕ ҫĕршывра, Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче пурăнма, ĕҫлеме,—ҫавăн ҫинчен ҫырса пыратăп ывăлăм!

# КИЛТЕ... ОТПУСКРА

Анне ыйтать:
— Мĕн тăватăн?
(Вăл хăй ĕне сăватъ,
А епĕ—чăхсене шутлатăп.)
— Ху кала-ха есĕ?—
Тетĕп епĕ.—Миçе кунта? Пĕлместĕп.
Пĕлместĕпех. Ăна ăнлантăм.
Шут ĕçне пĕлеп пулсан та—
Чăхсен шутне мантăм.
Миçеччĕ-ха? Миçе..
Çитрĕ çитмĕл виççе!
Хам татах шутлатăп:
Пÿрне хыççăн пÿрне хутлатăп.
Картиш тулли вĕсем—
Самăр пĕсехелĕскерсем:
Хăшĕ йурлаççĕ, какалаççĕ...
Туй арăмсем пек уткалаççĕ.

Анне ĕне сăватъ,
А епĕ—чăхсене шутлатăп.
Амбартан асанне тухатъ
(Вăл ĕнтĕ питĕ ватă).
Ăна чăхсем
Тахçантанпах таçтан паллаççĕ.
Мĕншĕн тесен—
Вăл вĕсене пĕрчĕ сапса паратъ-çке.
Чăхсен чĕлхине те пĕлет,
Чăхсемпе чăхсемле пуплет:
„Кăт-кă-ăт! Кăт-кăта-а-ах!
Килĕр, килĕр кунтарах!
Матак тăвăр ытларах...
Вара татах сапса парап!“
Ăна 7—8 чăх ответлесе,
Аслăк çинчен кăтиклесе,
Çăмарта туса анаççĕ...
Пĕрчĕ сăхма хыпаланаççĕ.

Анне ĕне сăватъ.
Пĕр ĕнене çеç мар—
Теприне сума пикенчĕ.
Пÿртрен сас йанăратъ,
Мана йăмăк йăхратъ:
„Пиçнĕ паçăрах икерчĕ!
Кĕр ĕнтĕ!
Ха, тăратъ вăл... тĕлĕннĕ“.
Тĕлĕннĕрен çеç мар
Çак тулли пурнăçран—
Йăмăкăм, ес ăнлан:
Çич çул килте пулман,
Çич çул сире курман.
Кил-йышри пурнăçпа
Пайан ак курнăçап.

Анне ĕне сăватъ.
Пурнăçа тавтăватъ.
Витре сĕтпе тулатъ,
Анне йăл-йăл кулатъ,
Калатъ:
„Тата тепĕр витре пулатъ“.
Тулли витресем пек хитре
Хаваслăх йалкăшатъ питре.

А еп пăхса тăратăп,
Сурăхсене шутлатăп.
Миçен кунта? Миçе...
Çитрĕ ак вунвиççе.
Татах нумай вĕсем—
Вăрăм çăмлăскерсем:
Картиш илемне кÿреççĕ,
Хăшĕ путек ĕмĕртеççĕ,
Хăшĕ ăшă шыв ĕçеççĕ.
Пурте самăр, пурте тутă—
Умра вĕсен—симĕс утă.

Ак йерипенĕн, майĕпе
Уçăлатъ вите алăкĕ—
Тухаççĕ сыснасем тăваттăн:
Иккĕш çамрăк, иккĕш ватă.
Ваттисен вуншар çурă—
Хăшĕ шурă, хăшĕ хура.
Пурте таса. Таса та çутă...
Пăхса тăратăп—чудă!

Умра ак вăкăр мĕкĕрет.
Хапхаран атте кĕрет:
— Атă, ывлăм, апатланар,—
Тесе пÿрте чĕнет мана.—
Апатланар та тумланар,
Клуба кайма хыпаланар,
Унта пайан лекци пулатъ.
— Кам вулатъ?—тетĕп еп.
— Хам вулатăп!—тет атте.
Ĕненетĕп.
Пыратăп, тетĕп.

Анне ĕне суса пĕтерчĕ.
Сĕт витрине çĕклетĕп,
Çĕклетĕп те пÿрте кĕретĕп.
Сар тулăран пиçнĕ икерчĕ
Çут çатмари çу ăшĕнче
Пăсланатъ сĕтел çинче.
Çийетпĕр.
Чейне те ĕçетпĕр.
Шур çăмартасене шаккатпăр.
Пĕр-пĕрин çине пăхатпăр,
Пăхатпăр та хавхаланатпăр.
Пит аван-çке тăван çемйере
Лармашкăн тулли кĕрекере.
Ак сăмавар чаш-чашкăратъ.
Радио музыкă паратъ.
Ларнă çĕртех килте еп
Мухтавлă Мускава итлетĕп.
Пит аван-çке тулли пурнăçпа
Пурнакан кил-йышпа курнăçма.
Велоçипед хыççăн велоçипед
Клуб умне чупса çитет:
Çыннисем сиксе анаççĕ,
Пухăва хыпаланаççĕ.
Ак епĕ пухура
Хамăр йал-йышсене курап.
Калаçаççĕ. Мухтанаççĕ.

Хайсемпе паллаштараççĕ,
Хăнана пыма сунаççĕ.
Пит аван-çке тулли пурнăçпа
Пурнакан йал-йышпа курнăçма.
Пуху шăпланчĕ.
Кун йĕрки пуçланчĕ.
Атте сухала шăлать. Йĕри-тавра пăхать.
Лекци вулама пуçлать.
Калать вăл, çулленхи пекех,
Вăйлă тырпул тума майсем пурри çинчен.

— Шанмала мар текех—
тет вăл,—çанталăк çине.
Пурте хамăртан килет,
Хамăр хĕрсе ĕçлениччен.
Калать атте кĕрхи калчасене
Мĕнле хĕл каçарма кирли çинчен.
Ăна итлеççĕ. Итлеççĕ те тăнлаççĕ.
Калать атте ман, опытник-сăнавçă.

М. П.

---

# Тимĕрç-лаççи

— Тул йенчен—вут тухать, шал йенчен—шыв йухать. Çав мĕн пулать?

Вăрнар районĕнчи „Бољшевик" колхозри тимĕрç лаççи пулать.

Акă вăл:



Тул йенчен                Шал йенчен.

# ФОКА

*(Салтыков-Шчедрин ҫырнӑ „Иудушка Головљов" произведени сыпӑкӗ)*

Тулта апрељ, ҫавӑнпа мужикӗн, йалanхи пекех, ҫимели ҫук.—Йалт ҫисе пӗтерчӗҫ, њањаксем, хӗле праҫник туса ирттерчӗҫ, анчах ҫуркунне ҫитес умӗн хырӑмӗсем пӗрӗнсе ларчӗҫ!"—шухӑшлаť Порфирий Владимирыч хӑй ӑссӗн; хӑй вӑл, йури тенӗ пекех, халь ҫеҫ пӗлтӗрхи уй-хир ӗҫне кӑтартакан счотсене йӗркелесе ҫитерчӗ. Февраљте йулашки ҫӗмелсене ҫапса пӗтернӗ, март уйӑхӗнче вӑл тырӑ пӳлмисенче выртнӑ, халь ӗнтӗ, ҫак кунсенче, мӗн пур тырра шута илсе кӗнекери кирлӗ пек графасем ҫине ҫырса хунӑ. Иудушкӑ чӳрече умӗнче кӗтсе тӑраť. Ав инҫетре, кӗпер ҫинче, пӗчӗкҫеҫ урапа ҫинче ларса пыракан мужик Фока курӑнса кайрӗ. Головљовӑна пӑрӑнакан ҫулйуппине ҫитсен вӑл тилхеписене темскерле васкавлӑн турткаласа илчӗ, пушӑ ҫук пирки, аран-аран утакан лашине аллипе хӑмсарса хӑратрӗ.

— Кунта!—пӑшӑлтатаť Иудушкӑ.—Иш лаши унӑн, тепле чӗрӗ йулнӑ. Анчах, пӗр-ик уйӑх тӑрантарсан ӑна—самай чипер лаша пулаť. Пӗр ҫирӗм пиллӗк тенкӗ, атту вӑтӑршпех те парӑн унӑн.

Ҫав вӑхӑтра Фока тарҫӑсем пурӑнакан пӳрт патне ҫитрӗ те лашине карта ҫумне кӑкарчӗ, вӑл ӑна пӗр ытам вакланса пӗтнӗ утӑ пӑрахса пачӗ те, тепӗр минутран вӑл Порфирий Владимирыч хӑй патне пыракан ҫынсене йалanах йышӑнакан хӗр тарҫӑсен пӳлӗмӗнче, пӗр урин ҫинчен тепӗр ури ҫине пускаласа тӑраť.

— Ну, тусӑм, мӗнле ырӑ хыпар калас тетӗн-ха?—пуҫлаť Порфирий Владимирыч.

— Ҫапла вӑт, сударь, кӑштах тырӑ кирлӗччӗ те...

— Ма апла! Хӑвӑнне ҫисе йатӑр, пулас? Ах, ах, ҫылӑх мар-ши сире! Вӑт есӗр ерех сахалтарах ӗҫнӗ пулсан, нумайтарах ӗҫленӗ пулсан, турра ытларах кӗлтунӑ пулсан, ҫӗрӗ те сиснӗ пулӗччӗ. Кӑҫал пӗр пӗрчӗ шӑтнӑ вырӑнта—пӑхан та, ҫав вӑхӑтра ик-виҫ пӗрчӗ те шӑтса тухнӑ пулӗччӗ. Кивҫен кайма та кирлӗ марччӗ.

Фока хирӗҫ калас вырӑнне, темле хӑйусӑртараххӑн йӑл-л кулса илет.

— Есӗ мӗн, турӑ инҫе те, курмаť тесе шухӑшлатним?—ҫаплах ӑс парса тӑраť Порфирий Владимирыч.—Анчах турри—акӑ вӑл. Унта та, кунта та, епӗр иксӗмӗр калаҫнӑ хушӑра та пирӗнпе пӗрле вӑл,—пур ҫӗрте те вӑл. Вӑл пурне те кураť, пурне те илтет, анчах асӑрхаман пек пулса ҫӳрет. Ҫынсем хӑйсен ӑспе пурӑнса пӑхчӑр-ха; курӑпӑр, мӗнле астӑвӗҫ вӗсем мана! А епӗр, вӑл асӑрхаманҫи пулнипе усӑ курса, хамӑр пурлӑхран турра ваљљи ҫурта лартмалӑх уйӑрса парас вырӑнне, хупахран хупаха ҫӳретпӗр. Вӑт ҫавӑншӑн турӑ памаť пире тырӑ—ҫапла-и, тусӑм?

— Ӑна ӗнтӗ мӗнне калӑн! Вӑл ҫапла!

— Ну, куратни ӗнтӗ хаљ, хаљ ӗнтӗ есӗ те ӑнлантӑн. Анчах мӗншӗн ӑнлантӑн? Мӗншӗн тесен турӑ санран хӑй ырлӑхне сирсе йанӑ. Тырӑ пулнӑ пулсан сан, есӗ каллех сӑмсуна каҫӑртма пуҫлаттӑн, хаљ ав, турра...

— Тӗрӗс вӑл, ехер те епӗр.

— Чим-ха, епӗ калам. Йалanах ҫапла пулаť вӑл, тусӑм, турӑ хӑйне манакансене йалanах хӑй ҫинчен аса илтерет. Уншӑн ӳпкелешме кирлӗ мар пирӗн, ӑна вӑл хамӑра усӑ кӳрес, тесе, ҫапла тунине ӑнланас пулаť пирӗн. Епӗр турра астуса пурӑннӑ пулсан, вӑл та пирӗн ҫинчен манас ҫукчӗ. Пурне те панӑ пулӗччӗ, ырашне те, сӗллине те, ҫӗрулмине те,—на ҫи! Выљӑхна та пӑхнӑ пулӗччӗ—ав, лашу сан, йепле чунне усраť вӑл апӑрша! Чӑх-чӗппӳсене те, йешӗл сан пур пулсан, вӗсене те чӑн-чӑн ҫулйӗр ҫине кӑларнӑ пулӗччӗ!

— Ку сирӗн йалтах тӗрӗс, Порфирий Владимирыч!

— Турра чысласси вӑл—пӗрремӗш вырӑнта тӑраť, унтан вара—аслисене, патшасем хӑйсем хисеп тунӑ ҫынсене... сӑмахран, помешчиксене...

— Ара епӗр, Порфирий Владимирыч, ахаљ те ӗнтӗ... Ҫапларах туйӑнаť...

— Сана вӑт „туйӑнаť", есӗ пуҫтавра шухӑшласа пӑх та сутне ту, тен, тӗрӗслесе пӑхсан, апла та мар, урӑхла пулса тухаť. Хаљ акӑ, ес ман пата ырӑш илме килтӗн те—калама ҫылӑх! Манпа ҫавтери кӑмӑллӑ, йаваш; анчах виҫӗмҫул, астӑватӑн-и, тырӑ вырма ҫынсем кирлӗ чухне, епӗ хам сирӗн пата, мужиксем патне, йалӑнма пытӑм, пулӑшӑр, тӑванӑмсем, тетӗп, хӑтарӑр, анчах есӗр еп ыйтнине хирӗҫ мӗн каларӑр? Хамӑрӑнне вырас пулаť, теҫҫӗ. Хаљ господасемшӗн ӗҫлеме ӗлӗкхи вӑхӑт мар, хаљ—ирӗклӗх!—теҫҫӗ. Ирӗклӗх, анчах тырри ҫук.

Порфирий Владимирыч Фока ҫине ӑс панӑн пӑхса илет; анчах лешӗ хускалмаť, кӑнт хытса кайнӑ пек тӑраť.

— Ҫавтери мӑнкӑмӑллӑ есӗр, ҫавӑнпа та телей ҫук ӗнтӗ сирӗн. Сӑмахран, хамах илем акӑ: турри те пилленӗ, патши те хисеп тунӑ, темеле ӗнтӗ мана, анчах епӗ—пуҫа каҫӑртмастӑп. Ӑҫтан мӑнкӑмӑлланма пултарӑп-ха епӗ? Мӗнех вара епӗ? Ӑман! Хурт-кӑпшанкӑ! Тфу! Анчах турри ав, епӗ лӑпкӑ иккенне кура, пиллерӗ мана. Хӑй те мана ырлӑхсӑр хӑвармарӗ, патшине те мана хисеп тума шухӑш пачӗ!

— Епӗ, Порфирий Владимирыч, ҫапла шухӑшлатӑп, ӗлӗк, помешчиксем патӗнче чухне, хаљхинчен нумай лайӑхрахчӗ!—ӑна йурама тӑрӑшса сӑмах хушаť Фока.

— Ҫапла ҫав, тӑванӑм, пулнӑ ҫав вӑхӑт сирӗншӗн те, праҫник турӑр, пурӑнса куртӑр. Пурте пурччӗ сирӗн: ырашӗ те, ути те, ҫӗрулмийӗ те. Ну, тепӗр тесен, иртнине мӗн аса илес ӑна, епӗ нумайччен ҫилленсе пурӑнакан ҫын мар: ун ҫинчен епӗ, тырӑ вырнӑ ҫын шырама пыни ҫинчен, такҫанах маннӑ, ахаљ кӑна сӑмах ҫине килсе тухрӗ. Мӗнле каларӑн ҫак есӗ: ыраш кирлӗ пулчӗ терӗн-и ҫак?

— Ҫапла ҫав, тырӑ кирлӗччӗ те...

— Сутӑн илме хатӗрлентӗн-им?

— Ӑҫта илес! Кивҫенле, сначат, ҫӗн тырӑччен!

— Ахти-хти! Ырашӗ кӑҫал, тусӑм, ҫыртаť! Пӗлместӗп ӗнтӗ, тем тумала ман санпа...

Порфирий Владимирыч пӗр минутлӑха шухӑша кайса тӑраť, чӑнахах та пӗлмест, тейӗн ес ӑна

мĕн тума кирлине: „çынна пулăшас кăмăлĕ те пур пек, ырашĕ те çыртаĭ пек"...

— Йураĭ, тусăм, тыррине ăна кивçен те пама йураĭ,—тет вăл йулашкинчен:—çапла ара, тĕрĕс-сипех калас пулсан, ырашĕ çук ман сутмалăх: турă панă йапалапа суту-илӳ тăвас ĕçе килĕштерме чăтăм çук ман. Кивçенле вăт—йураĭ, ăна епĕ хавасланса парăп. Епĕ вĕт, тăванăм, астăватăп: пайан еп сана кивçен парап, ыран—ес мана кивçен паран. Пайан ман ытлашшипех пур—ил, кивçен ил! Пĕр пăт чĕрес илес тетĕн пулсан—пĕр пăт чĕрес ил. Çур виçе кирлĕ пулсан—çур виçе ил. Тен, ыран, ĕçсем тепĕр майлă çаврăнса тăрĕç те, ман хамăн та сан чӳречӳ умне пырса шаккамала пулĕ: пĕр çур виçе кивçен памăн-ши, Фокушкă,—çиме çук! темеле пулĕ, тен.

— Аçта ĕнтĕ, есĕрех пырас çук та-ха, сударь...

— Епех пырас çук, тĕслĕхшĕн калатăп-ха... Ун пек çеç çаврăнса тăраççĕ-и вара ĕçсем ку тĕнчере. Ав хаçатсем çинче çыраççĕ. Наполеон тем тери çӳлте тăнă пулсан та, итту ĕç кăларайман, ăнтарайман. Çапла çав, тăванăм! Мĕн чухлĕ тырă кирлĕ-ха çак сана?

— Хăвăрăн кăмăлăру пулсан, пĕр сакăр виçе кирлĕччĕ те...

— Йураĭ сакăр виçе те. Анчах малтанах каласа хурап еп сана: çыртаĭ, тусăм, кăçал ыраш, çавтери хытă çыртаĭ. Ак мĕнле тăвăпăр епĕр санпа: епĕ сана ултă пăт чĕрес виççе пама хушăп, ес вара мана, тепĕр сакăр уйăхран ун çумне иккĕшне хушса парăн—вара вăл шăп та шай сакăр виçе пулаĭ. Процент тавраш илместĕп епĕ, ытлашшине ырашпах илеп...

Иудушкă сĕнĕвне илтсен, Фока сывлăш çавăраймийех пулса кайаĭ, пĕр авăк вăл нимĕн те чĕнмест, хулпуççийĕсене çеç хускаткаласа илет.

— Нумайтарах мар-ши, сударь?—тет вăл йулашкинчен, шикленнипе пулас.

— Нумай пулсан—урăххисем патне кай! Епĕ, тăванăм, ирĕксĕрлесе мар, чунтан пулăшас кăмăлпа сĕнетĕп. Епĕ сана чĕнтермен, ес ху мана шыраса тупнă. Есĕ—ыйтăвпа, епĕ—ответпе. Çапла вăл, тусăм?

— Çапли çаплах та-ха вăл, ытлашши нумай хушса пама ыйтнă пекрех-ха?

— Ах-ах-ах! А еп сана, тӳрĕ мужик, йĕркелĕ çын тесе! Ну, каласам ĕнтĕ мана, мĕнпе пурăнма хушасшăн ес мана? Ман ĕнтĕ расхутсене ăçтан тултарса пымала? Мĕн чухлĕ расхут ман—пĕлетни ес ăна? Ман расхутсен, ачам, вĕçĕ-хĕрри те курăнмасĭ. Ман ăна пар, теприне çырлахтар, виççĕмĕшне ваљљи кăларса хур. Пурне те кирлĕ, пурте Порфирий Владимирыча турткалаççĕ, Порфирий Владимирычăн вара, пуриншĕн те тӳлемеле. Тепĕр тесен тата, çавă та пур: тыррăма епĕ купцана сутса йанă пулсан—епĕ сĕтел çине шăнкăрт укçа илсе хураттăм. Укçа вăл, ачам,—таса ĕç. Укçапа епĕ билетсем илсе тултарап та, тĕплĕ вырăна чиксе хурап та, процентсемпе усă курма пуçлап. Шухăш та, хуйхă та çук; купонне касса илен те—укçа пар. Ырашĕ хыççăн çӳрес пулаĭ-ха, аппаланас пулаĭ унпа, тăрăшас пулаĭ! Мĕн чухлĕ типсе хухаĭ вăл, мĕн чухлĕ тăкăнаĭ, шăши мĕн чухлĕ çийет тата! Çук, ачам, укçапа—ăçтан танаштаран! Такçанах ăса кĕме вăхăт та мана, такçанах мĕн пуррине укçа туса хумала та, тухса каймала сирĕн патăртан!

— А есĕр пирĕнпе, Порфирий Владимирыч, пурăнса пăхăр.

— Тем пекехчĕ, ачам, анчах вăй-халăмсем çук ман. Ĕлĕкхи пек вăйлă пулсан, паллах ĕнтĕ, пурăнаттăм-ха, çапăçаттăм-ха сирĕнпе. Çук, вăхăт, вăхăт ĕнтĕ канма. Тухса кайап ак Тройцă Серги патне, тухса кайап та, угодник хӳтĕлĕхне пытанса ларап, никам та илтеймест вара мана. Анчах мана çавтери аван пулаĭ: лăпкă, тӳрĕ пурнăçпа пурăнăп, шăп, ни çуйăхни-туни, ни харкашни, ни шавлани пулмĕ—пĕлĕт çинчи пек!

Пĕр сăмахпа каласан, Фока тем тĕрлĕ çаврăнсан та, ĕçсем пурĕ-пĕр Порфирий Владимирыч кăмăлне килнĕ пек майлашăнса пыраççĕ. Анчах кунпа сахал-ха: Фока кивçен илмели условисемпе килĕшнĕ самантра, сценă çине темле Шелепихă тухса тăраĭ. Ахаљрен кăна, çĕтмен çерем, пĕр теççетин пулĕ ĕнтĕ çулмали, ун чухлĕ те пулаймасĭ пуљ... Вăт çавна çулса...

— Епĕ сана кивçен парап—есĕ те мана пулăш,—тет Порфирий Владимирыч:— ку ĕнтĕ процентсемшĕн мар, ахаљ кăна, хире-хирĕçле! Турă пуриншĕн те, а епĕр пĕр-пĕрне пулăшар! Пĕр теçеттина ес ăна, шӳтле кăна çулса хуран, епĕ сана малашне манмăп, аса илĕп! Епĕ вĕт, ачам, усă çын! Ес мана пĕр тенкĕлĕх пулăшса паран, епĕ сана...

Порфирий Владимирыч тăраĭ те ĕç пĕтнĕ йатпа чиркӳ çинеле пăхса пуççапаĭ, Фока та, ăна кура, сăхсăхаĭ.

Фока çухалаĭ. Порфирий Владимирыч пĕр листă хут илет те, счот тытаĭ, счот шăрçисем унăн йăпăр-йапăр тыткалама вĕреннĕ аллисем айĕнче сиккелеççĕ... Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех цифрсем чарусăр ĕçкĕри ӳсĕрсем пек ташлама пуçлаççĕ. Иудушкă куçĕ умĕнче пĕтĕм тĕнче тĕтре йевĕр тĕтĕмпе хупланса лараĭ: вăл, хĕрӳленсе кайса, çавтери хăвăрттăн счот çинчен хутсем çине, хутсем çинчен счот çине куçаĭ. Цифрсем ӳсеççĕ, ӳсеççĕ...

**Алакĕр В.** куçарнă.

# ТĂЛĂППА

Ăрси йалĕнчи „Социалисăм никĕсĕ" колхоз (Похвистнĕ районĕ, Куйбышев облăçĕ) клубĕнче, 3—4 çĕр çын вырнаçмали залра, пĕр çĕтĕк тимĕр кăмака çунса лараĭ. Кăмакин ăшши хăй таврала пĕр метр талкишне ăшатаĭ.

Çтенисене тăм шăлман. Хăшпĕр тĕлте мăкламан та. Чӳречисем çĕмрĕк. Çавăнпа та спектакăле пыракансем таçта инçе çула кайнă пек тăлăпсем, аçамсем тăхăнса пыраççĕ. Çапах та шăнса кӳтсе кайаççĕ. Сурнă сурчăк çĕре çитиччен шăнса пăрланса, мăйăр ӳкнĕ пек, шăкăртатса чупса кайаĭ.

Çил-тăман тухсан йур çавра çил пек çаврăнаĭ, куçа та, çăвара та кĕрсе тулаĭ. Клуба кĕртсе тултарнă йур кĕртне хуĭ те ниме тусах тасаттар.

**Хĕрлĕ Захар.**

### Тӳрлетни

„Капкăн" журналăн 9—10-мĕш номĕрĕнче пичетленсе тухнă „Çурри кăна" заметкăри ĕç Вăрмар районĕнче мар, Вăрнар районĕнче пулнă.

# „Кăтартмастăп вĕсен умĕнче хам айванлăха“

Чĕннĕ хăнасем пурте пуçтарăнса çитнĕ. Йолкă тавра çуртасем йăлтăртатса çунаççĕ. Анчах уйав çаплах çитеймест-ха.

Çĕнĕ çулччен тата тăватă минут. Ку йулашки минутсем йурийех пăлахайа персе майĕпен шăвăннăн туйăнаççĕ. Аптранă йенне Кириле мучи халлап та пуçласа пăхрĕ, анчах никам та итлеменнине кура, шăпланса каллех сехет йĕппи çине пăхма тытăнчĕ.

Йулашкинчен çтена çумĕнчи сехет ӳсĕрме хатĕрленнĕ пек хăйăлтатса илчĕ те, çапма пуçларĕ. Пĕрре, иккĕ... пиллĕк... вуннă, вунпĕр...

Вуниккĕмĕш çапни илтĕнмерĕ: пурте савăнăçлăн кăшкăрашса пĕрне пĕри çĕнĕ çул йачĕпе сывлăх сунма пуçларĕç.

Сасăсем пăртак лăплансан, Кириле мучи ура çине тăчĕ те, хăвăрттăн унтала-кунтала пăхса илчĕ.

— Йурат еппин,—терĕ вăл,—çĕнĕ çул йачĕпе епĕр те ырлăх-сывлăх сунатпăр еппин. Çитнĕ уйава уйавласах пулаť, ним тума та çук.

Кириле мучи аллинчи сăра куркине ӳпĕнтерчĕ те, турелкке çинчи пулă çине хайаррăн пăхса пирус чĕртрĕ.

— Çĕнĕ çул уйавне хирĕç епĕ çур сăмах та каламастăп,—терĕ вăл.—Анчах çапах та ĕлĕкхи уйавсем авантарахчĕ...

Унтан, хăйне хирĕç никам та тавлашманнине кура, çав сăмахнех тепĕр хут каларĕ:

—Ĕлĕкхи уйавсем авантарахчĕ, тетĕп. Неччу ман çине ухмах йе ăсран тайăлнă çын çине пăхнă пек пăхма. Ĕнентерес-и? Ĕнентеретĕп те. Акă, пирĕн вăхăтра, çĕнĕ çул уйавĕ умĕн раштав пулаканччĕ, а халĕ—тӳрех çĕнĕ çул уйавлама тытăнаççĕ. Тĕрĕссипе каласан, епĕ раштава хӳтĕлеместĕп: хăвнах хакла лараť. Хăйамат çине ăна. Пĕр çĕнĕ çул та çитет, тейĕпĕр.

Анчах мĕнле кĕтсе илетĕр-ха есĕр ăна, е? Калăпăр, пĕрне-пĕри сывлăх сунса сăра ĕçетĕр, стакансем хире-хирĕç шаккатăр, тĕрлĕ çитĕнӳсем тума сĕнетĕр, а малала мĕн? Ак есĕ, шăллăм, инженер пулса ĕçлетĕн, ухмах çынах та мар, тейĕпĕр, анчах мĕнле калаçрăн-ха есĕ паçăр йулташупа телефон тăрăх? Сывлăх сунатăп, терĕн те, пĕтрĕ те-и? Епĕр çамрăк чухне чӳречесен айне пыраттăмăр та, çăва тĕпĕнчи сасăпа сехре хăпмали сăмахсем мĕкĕреттĕмĕр. Йе тата ватăрах çын чӳречи патне пырса „вечнайа памĕт“ йурлаттăмăр. Тĕнчере çук интереснă тухаťчĕ, мăнтарăн. Пур çĕрте те уйав пек туйăнатчĕ. Сирĕн çавнашкаллисем ăçта? Çук вĕсем сирĕн, шăллăм!..

1908-мĕш çула кĕтсе илнине астăватăп. Сивĕ çирĕм градусран та иртетчĕ пулмала. Епĕ ун чухне пĕр пикене çавăрасшăн вĕтеленсе çӳреттĕм. Çак хĕр пĕр касхине ман пата пычĕ те „хапха умне тухса йумăç пăхас-ха, мĕнле йĕкĕте качча тухассине пĕлес“, тет.

Чупса тухрĕ хайхискер кĕпе вĕççĕнех. Епĕр шӳт туса алăксене питĕрсе тĕкĕлесе лартрăмăр. Пăртак тăрсанах, хайхи хĕрача пирĕн алăка шаккама тытăнчĕ. Чӳречерен те, алăкран та шаккаса пăхаť. А епĕр илтмĕш пулса балалайкă калатпăр, пыр тĕпне хыртарса тĕрлĕ ухмахла йурăсем йанрататпăр. Макăрма пуçласан çеç уçса кӳртрĕмĕр. Ай-уй йатларĕ те вара хăй пире!.. Йăвăр тăпри çăмăл пултăрах, мĕскĕнĕн!

Мĕн? Вăл çавăн хыççăн простутицă пулса вилнĕ мар-и, тетри? Çук, çук, ун чухне мар, пĕр ерне кайарах ӳпке чирĕпе тата урисем шыçăнса кайнипе вилчĕ. Мĕн ман çине тĕлĕнсе пăхатăр есĕр?

Мучи хăй умĕнче ларакан сăра куркине пушатрĕ те, калаçма сăлтав шыранă пек пăртак чĕнмесĕр ларчĕ.

— Ак есĕр тавлашатăр,—терĕ вăл.—Анчах сирĕн тавлашура нимĕнле хĕрӳлĕх те çук. Пĕр-пĕрипе килĕшсех пыратăр. Пирĕн вăхăтра кашни харпăр-хăй сăмахĕшĕн тăраťчĕ. Иккĕмĕш сехет тĕлнеле обйазателнă çапăçу пуçланса кайаťчĕ вара. Пĕррехинче ман йулташ хăйĕн сăмахне çийеле кăларма тăрăшса Сунас Йакуçинне хăлхине çыртса татнăччĕ. Çĕнĕ çул касcенче хăнанамĕне чĕнсен епĕ йаланах хĕве пĕр-пĕр йăвăр йапала чиксе кайаттăм...

Çĕнĕ çул касĕсенче хĕрсем мĕншĕн пуслăх йăвантарнине пĕлетри есĕр? Шĕтĕрнек мĕншĕн ыталанă? Ак есĕр, çамрăк ашпирант, пĕлетри çаксене? Вăт пĕлместĕр те. Ăна хĕрсем качча тухас умĕн çапла хăтланнă, мĕнле çынна кайассине пĕлме. Епĕ пурне те пĕлетĕп.

Унтан мучи крешчени уйавĕ çинчен, пăр шăтăкĕнче шыва кĕрсе кăшт çеç анса кайманни çинчен тата йулашкинчен мăнкун çинчен каласа парса авалхи йурра чăсма тытăннăччĕ, çынсем сĕтел хушшинчен тухса пĕтрĕç.

Çамрăксем ташă пуçларĕç. Мучи касса кайсах вĕсен çине пăхса тăраť. Паллах, ташă ун кăмăлне кайаť. Анчах, çамрăксенчен хăшĕ те пулин хăй патне пырсанах, вăл кӳреннĕ пек пулса çамкине картлантараť.

— Çапла ташлаççĕ-и ăна? Вăт ĕлĕк ташлаťчĕç тĕк ташлаťчĕç. Çӳçӳ виреле тăрса кайаччĕ курсан.

Кĕçех ватă Кириле çывăрма карĕ. Пĕр çур сехет пек иртсен унăн ывăлĕпе хăнисем йунашар пӳлĕмре такам мăкăртатнине илтсе алăк патне пычĕç.

Кириле мучи хăйпе хăй калаçаť:

— Вĕсен пурнăçĕнчен тĕлĕнсе, кăтартмастăп хам айванлăха... Пирĕн тымартан тухнă ачасемех ĕнтĕ, ĕнер çеç-ха—ним те мар пулнă. Ак халĕ пыр та калаç вĕсемпе—пĕри инженер, тепри —ашпирант, виççĕмĕшĕ—учител. А епĕ пур —аллă çула çитиччен витерен тухса курайманăм, аçа çапасшĕ кулак патĕнче пилĕк аврăм. Савăнăç курни çинчен калама та кирлĕ мар: пĕрпĕр йĕке-хӳре çапса пăрахсан кулса курнă пулĕ çеç... Вăхăтсăр çуралнă çав. Халĕ пулсан, тен, епĕ те ашпиранта тухнă пулăттăм. Йураť, Совет влаçĕ пулчĕ. Ĕлĕк пулнă пулсан, ыйткаласа çӳреме тиветчĕ... Çамрăксем чейе çав вĕсем: пĕлеççĕ хăçан çуралмалине. О!.. пиллĕкĕмĕш сехет ĕнтĕ, çаплах никампа никам та çапăçакан çук.

Йураť ĕнтĕ, кăтартмастăп вĕсен умĕнче хам айванлăха.

Ш.

# Фашисăм тискерлĕхĕпе рассă теорийĕ



ГИТЛĔР: Шурă рассăна хўтĕлететĕп епĕ. Йеврейсене вилĕм! Католиксене вилĕм!.. Сыв пулчăр йапонĕцсем!

# Пысăк

Тăван йал сăн-пичĕ 10 çул хушшинче чылай çĕнелме пултарнине Михайлăв Иван малтанах, хулара чухнех пĕлнĕ пулин те, ун чухлех улшăнассине шухăшламан. Колхоз туса лартнă çуртйĕрсем кăна мар, колхозниксен çурчĕсем те ĕлĕкхинчен тем тери пысăккăн курăннă ăна.

— Ак сан піччу килĕ,—тенĕ ăна лартса килекен колхозник.—Çитрĕмĕр.

— Суйатăн пуљ,—тенĕ хирĕç вăл ĕненмесĕр.— Пўрчĕ ытла пысăк.

— Суйса мар. Виçĕмçул лартрĕ вăл ăна. Хăвăр хушăра çыру çўретмен те, пĕлмен ĕнтĕ есĕ. Çапла, пиччун пўрчĕ çак. Çитрĕмĕр.

Михайлăв пўрте кĕчĕ, пиччĕшĕпе инкĕшне ал парса чуптуса илчĕ. Унтан вĕт-шакăр ачасем çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ:

— Ай, пысăкланса кайнă! Ку Ваççа пулĕ,—терĕ пысăкраххи çине кăтартса вăл.

— Çук. Ваççа вулав çуртне кайнăччĕ-ха. Ваççаран кĕçĕнреххи-ха ку. Йăван йатли,—терĕ кулкаласа инкĕшĕ.

— Ну?! Ой, пысăкланса кайнă! Ку Варвари йатлăччĕ пулас. Аван-и, Варвари? Мана палларăн-и?

— Ак кусене курман есĕ,—терĕ пиччĕшĕ ытти ачисем çине кăтартса.—Ку Мишă йатлă, ку Колђă, ак ку тата—Машшă, чи пĕчĕкки, сăпкари—Тамарă йатлă.

— Ултă ача?!—Ой-ой-ой!

— Улттă нумай-и вăл? 18 пулсан нумай теме пулаť чĕ. Пирĕн колхозра 8 ачаллисем, 10 ачаллисем нумай. Никам та вĕсене ытлашши нумай ачаллă, темест.

Инкĕшĕ вĕрекен çутă сăмавара мăн сĕтел çине лартма йăтса пынине курсассăн, пĕр самантлăха ним калама пултараймарĕ Михайлăв. Кайран:

— Инке! Ой, пысăк-çке сирĕн ку сăмавар,—терĕ.—Ун пек мăнтайа ăçта туйаннă?

— Сăмавар? Пысăк-и вара вăл. Пĕр витре ытларах кăна кĕрет. Кўршĕрисен икĕ витре кĕрекенни пур. Ăна пысăк теме пулаť.

— Икĕ витре? Епĕ столовăйра икĕ стаканран ытла ĕçместĕп. Ĕçес килмест. Сăмавар, хусах пирки, туйанман.

— Икĕ стакан?! Пирĕн пĕчĕк ачасемех виçшер стакан ĕçеççĕ те, есĕ мăнă çын мĕнле ик стаканпах тăранан. Сахалçке!

Ун умне инкĕшĕ çимелисем лартса параť.

— Çи-ха,—тет.—Çул çинче ĕшенсе килнипе хырăму хыр тăрнех хăпарса ларнă пулĕ-ха сан? Çи!

— Ой, мĕн тери пысăк кукăљ ку!

— Пысăк-и вăл? Пĕчĕк тетĕп-ха еп ăна. Пысăккине кăларман-ха. Пиçеймен пулĕ, терĕм те. Çи-ха, çи!

— Касăкĕсем ытлашши пысăк сан. Тытма хăрамала. Çисе йараймăп. Çак касăкăн $^1/_8$ пайне касса пар.

— Ма пайлас? Çи. Коклетне те çи-ха!

— Котлет? Ой, ку котлет ара манăн пуçа тăхăнмали кепкăран та мăнăрах пулмала. Ăна çисе йарсан, вар-хырăм ыратакан пулса ларĕ. Катарă ман. Вар-хырăмри катарă. Нумай аш-пăш çиме йурамасť. Тухтăр хушмасť. Çавăнпа, инкем, çак котлета есĕ вуникĕ пайа уйăр та, мана икĕ пайне кăна пар. Унтан ытла çиме халăм çитмест, ĕнен!

Çакна илтсен хăраса ўкрĕ инкĕшĕ:

— Ай-уй! Пиçеймен пуљ апла... Пĕрелĕхе касарах. Нихăçан та кăмакаран пиçмесĕр кăларакан марччĕ.

— Пиçмен мар. Ун чухлĕ хырăма вырнаçаймĕ, тесе шикленерех тăратăп.

— Апла пулсан, чирлĕ пулĕ есĕ.

Çупа, çăмартапа çатма çинче ăшаланă шăртанĕ те тем чухлех, пысăк. Тутлă тăпăрчă йĕкерчи те питлĕх пысăкĕшех.

Ĕçнĕ-çинĕ хушăра тем çинчен те калаçрĕç. Радиопа итленĕ оперăсемпе концертсем хăшĕсем кăмăла кайни çинчен те, саслă кино-фиљмсем çинчен те, тĕнчери лару-тăрусем мĕнле пыни çинчен те, т. ыт. те.

Калаççа ларнă хушăра Михайлăв хăйĕн тăван пиччĕшĕпе инкĕшĕ çине пăхаť те, вĕсем те ĕлĕкхинчен пысăкланнине кураť вăл.

Ларсан, ларсан пиччĕшĕ Ивана сарлака краваť умне çаватса пырса, çывăрма калаť.

— Ой, краваť те питĕ пысăк-çке. Улăп кровачĕ пуљ ку! Минтерĕсем те май çук пысăк. Тўшекки те.

— Кайăк-кĕшĕк нумай пирĕн. Мамăкĕ те, тĕкĕ те пулаť. Аптрамастпăр.

Ирхине, тул çутăлсан, инкĕш ĕне сунине курма тухаť.

— Ай-уй! Ĕне мĕн пысăкĕш сирĕн?! Ĕлĕкхи пĕчĕкçĕччĕ. Сыснасем—ой, шултăра. Сурăхсем те...

— Шултăра çав. Шултăра пурнăçпа пурăнатпăр. Çавăнпа пурте шултăра,—тет инкĕшĕ савăнса.

Иван Мучи.

# Атăпа калуш çĕрĕк çăпатана пытарни

*ИЛЛЕ ТУКТАШ*

Лăп-лап, лăп-лап! тутарса утса пыраť çĕрĕк çăпата тусанлă çулпала. Хăй шăлт çĕтĕлсе пĕтнĕ, сўсленсе кайнă хўрине аранаран анчах сĕтĕркелет.

Кăна хирĕç сăран атăпала вĕр-çĕнĕ калуш килеççĕ.

— Ăçта кайан, çăпата тус?

— Ох тăванăмçем, ан та ыйтăр-ха! Хуçам килтен хăваласа кăларчĕ,—тет кусене хирĕç çĕрĕк çăпата, хăшти-хашти сывласа.

— Мĕн пирки капла айăпа кĕтĕн тата?—ăнланаймасăр ыйтаççĕ лешсем.

— Айӑпӑм нимӗн те çук манӑн. Епӗ ун патӗнче мӗн çуралнӑран варах тарçӑра пурӑнтӑм. Сивӗ кунсенче сивӗрен сыхларӑм ун урисене, йӗпе кунсенче—йӗперен упрарӑм, шӑрӑх кунсенче—шӑрӑхран хӳтӗлерӗм. Халӗ ак колхоза кӗчӗ те, мана, ватӑскерне, пахча хыçӗнчи çырана çеç кайса ывӑтрӗ... Ех-ха-хай!

— Халӗ ӑçта кайса вырнаçма шутлатӑн вара?

— Хам та пӗлместӗп ӑçта кайассине, тӑванӑмсем! Аптранӑ йенне, пӗр-пӗр хулана çитсе, мӗнле те пулин утил-сырйо магазинне сторӑжа кӗрсе пулмӗ-и, тесе шутлатӑп. Унта манран йапӑхрах упӑр-тапӑрсене те илеççӗ, тенине илтнӗччӗ ӗпӗ...

— Е-е, çук, йулташ! Унта сан пеккисем çине çаврӑнса та пӑхмаççӗ,—пӳлчӗ ӑна сӑран атӑ.

— Унта мӗнле те пулин ӗçе йурӑхлисене анчах илеççӗ,—ӑнлантарса пачӗ çутӑ каллуш.

—А есӗ мӗнле ӗçе йурӑхлӑ? Вилмели кӑна йулнӑ санӑн.

— Апла пулсан, ӑçта кайса кӗрес-ха ӗнтӗ манӑн, тӑванӑмсем? Калӑр хуть есӗр те пулин тархасшӑн!—тилмӗрет мӗскӗн сасӑпа çӗрӗк çӑпата, пӗркеленчӗк пичӗ тӑрӑх йухса анакан куççуљне шӑла-шӑла илсе.

Атӑпа калуш пӗр-пӗрин куçӗнчен ытарлӑн пӑхса илчӗç те ӑна çапла каларӗç:

— Акӑ мӗн, йулташ çӗрӗк çӑпата! Санӑн татах та пурнассу килет пулсан, кай луччӗ пӗр-пӗр музейа. Унта сана тен йышӑнӗç.

— Ну, тавтапуç сире, ырӑ кӑмӑллӑ тӑванӑмсем! Пирӗн хамӑр йалтах колхоз музейӗ пурччӗ-ха. Кайса пӑхам-ха еппин çавӑнта. Есӗр хӑвӑр та унталах çул тытмастӑр-и?

—Епӗр пуйан та куљтурӑлӑ пурнакан колхозник патне ӗçе кӗме кайатпӑр,—тавӑрчӗç мӑн кӑмӑллӑн атӑпала çутӑ калуш.

Ку сӑмаха илтнӗ хыççӑн çӗрӗк çӑпата вартах кайала тавӑрӗнчӗ те, атӑпала калуш хыççӑн лакӑштатса утма пуçларӗ. „Кусен çумӗпе тен епӗ те ӗçе вырнаçӑп", тесе шутларӗ вӑл хӑй ӑшӗнче.

Кайсан-кайсан, кусен пӗр лачака урлӑ каçмала пулчӗ.

Йашт! йарса пусрӗ вӑрӑмӑн сӑран атӑ. Йарса пусрӗ те лачака тепӗр йенне каçса та тӑчӗ.

Пӗррех сикрӗ çутӑ калуш çӑмӑллӑн. Сикрӗ те, вӑл та лачакан тепӗр йенне каçса тӑчӗ.

Тӑкӑлт! сикме пикенчӗ çӗрӗк çӑпата та. Пикенесси пикенчӗ, анчах шӑп та шай лачака варрине лачлатсе ӳкрӗ. Укнӗ-ӳкменех вӑл пылчӑк ӑшне путса анса кайрӗ.

Атӑпала калуш çӗрӗк çӑпатаран кула-кула кӗçех çурӑлса кайатчӗç. Унтан вӗсем çапла шут турӗç: тивӗçлӗ мар çӗрӗк çӑпата çул çинче йӑваланса выртмашкӑн. Çапла шут турӗç те, ӑна лачакаран туртса кӑларса навус купи айне пытарса хучӗç. Хӑйсем çав кунах пуйан та куљтурӑлӑ пурӑнакан колхозник патне çитсе вырнаçрӗç.

Çапла пӗтрӗ хевтесӗр çӗрӗк çӑпата пурнӑçӗ. Тепӗр ернерен унӑн вилтӑпри çине пысӑк кӑмпа шӑтса тухса ларчӗ.

Акӑ вӑл.



# Стройтрест айĕпĕпе

*Н. Ҫверчков ӳкерчĕкĕ.*

Стройтрест Шупашкарти ача ҫуратмали ҫурта питĕ вăраха тăсса тăвать.




— Кăна тимĕр листа ҫине ҫыртармала пулнă. Ҫуртне туса пĕтериччен йăвăҫ хăма ҫĕрсе ӳкме пултарать.

# Ей, кам унта?

**(Авалхи пурнăҫран)**

Чупаха Ваҫилийĕ кĕҫĕр никам патне те кайма шухăш тытман. Пĕр-пĕр тытса чаракан йапала пулмасан Чупаха Ваҫилине нийепле те каҫ пулсанах килне лартса хăварас ҫукчĕ. Каҫ пулсан сахал-и кайса шăкăлтатса лармали вырăнсем, сахал-и калаҫмали сăмахсем. Кĕҫĕр Ваҫили чĕри вĕрет пулсан та, киле ларса йулнă. Сăлтавĕ те пысăк йапала мар, ҫăпати кĕлли ҫеҫ ҫĕтĕлнĕ, анчах сивĕ пылчăклă кĕр ҫанталăкĕнче ҫĕтĕк ҫăпатапа ăҫта тухса кайан-ха.

Ваҫили урлă сак ҫине ларнă, чĕркуҫҫи ҫине ҫĕтĕк ҫăпатине хурса пушăт вĕҫсемпе саплать. Арăмĕ кӳрше тухса кайнă пулас, курăнмасть. Ачисем хăшĕ сĕнтĕре ҫинче, хăшĕ кăмака ҫинче сапаланнă.

Урамра кĕрхи ҫил улать. Чӳрече хупписем шакăлтатаҫҫĕ. Урам урлă Ҫтаппансен питĕркĕҫсĕр хапхи уҫăла-уҫăла хупăнать. Касă-касă ҫилпелен йывăҫ ҫулҫисем чӳречене пырса ҫапаҫҫĕ. Урамра сĕм тĕттĕм, куҫа чиксе шăтарас пек. Ҫитменнине Ваҫилисен йытти такам ҫине сиксе ларас пек вĕрет. Вăл пĕрре карташĕнчи пусма айне кĕрет, тепĕрре ҫил-хапха айĕнчен вĕрет, анчах килҫурт ҫумĕнчен хăпмасть, темĕскершĕн хăранă пулас.

Чупаха Ваҫилийĕ малтан йытти вĕрни ҫинчен асне те илмен (йытăн ҫав ĕҫ вĕт), унтан йытти пĕр чарăнмасăр хăраса вĕрнине кура хăраса кайрĕ.—Мĕншĕн вĕрет-ха ку?—шухăшлать вăл.—Кĕрхи каҫ тĕттĕм, вăрăсемшĕн рай. Тапака вăрлама килмерĕҫ-ши!

Ваҫили тапак ҫинчен ахалех аса илмест. Чупаха Ваҫилийĕ лартса ӳстерекен тапак пĕтĕм йалта чапа тухнă. Тапакĕпе пĕрле Ваҫилийĕ те йалта хисеплĕ вырăнта. Хăватлă тапак туртасшăн сахали йалта Ваҫилийе антăхса шыраса ҫӳрекенсем. Тапак чапĕ—Чупаха Ваҫилийĕ чапĕ, ҫавăнпа та вăл халĕ ҫăпатине пăрахсах карташне тухса кайрĕ. Хуҫи тухсан Пулкан йатлă йытти тӳрех ҫил-хапха йенне ыткăнчĕ, анчах ҫил-хапха айĕнчен урамала нийепле те тухмасть. Ваҫили вĕскĕртсе те пăхать йыттине, анчах йытти малала сикет те унтан татах кайала чакса хуҫи ури хушшине кĕрсе пытанать.

# Перестраховкă

*Н. Ҫверчков ӳкерчĕкĕ.*



— Пăранласа пама вăхăт ҫитнĕ те, кăштах тăхтас тетĕп-ха?

— Ма тата?

— Халех пăранласа парсан, авалхи сурхури йачĕпе пăранланă ку, теме пултарĕҫ.

„Мĕне вĕрет-ха ку?—шухăшлать Васили. Хапхи çине тайанса урамала пăхать. Çĕр тĕттĕм. Çитменнине, çутă пӳртрен тухнипе çĕр тата тĕттĕмрех туйăнать, халĕ хура çтена çине сăмсупа тирĕннĕ тейĕн. Кăшт тăрсан Васили куçĕсем тĕрлĕ хуралтăсен мĕлкисене уйăра пуçларĕç, çаварĕнчи чĕлĕм муклашки те уйрăмах палăра пуçларĕ. Йытти уртăннă йеннеле пăхать те, Васили тĕлĕнсех кайать. Пӳрт кĕтессинчен инçе те мар хупахсем хушшинче темĕскерле йапала çуначĕсемпе лăплăп тутарса тăрать.

— Ей, кам унта?—кăшкăрать Васили. Сас-чĕвĕ çук.

— Ей кам унта? Мĕн чĕнместĕн? Ак тухса уруна çапса хуçсан!—çиленсе кăшкăрать Васили. Сасчĕвĕ çук. Сасартăк çак вăхăтра йе хăранипе, йе чăнахах та Васили куçĕ умĕнче вут пăнчи мĕкĕлтетсе илчĕ. Унччен те пулмарĕ, Васили пӳртеле вăшт тăвайрĕ. „Шуйтан, шуйтан ку!—шухăшлать Васили, йе вилнĕ çын килнĕ".

Василисен хыçĕнче масар, çавăнпа та вĕсен урамĕнче вилнĕ çынсене курнине калаçкалаççĕ. Васили кĕл тăвать, анчах йытти вĕрме нийепле те пăрахмасть. Кăшт тăрсан чĕри лăпланса çитнĕ вăхăтра Васили пуçне çиçĕм пек шухăш пырса кĕрет: „Кулине хăраса ан ӳктĕр (унăн арăмĕ Кулине йатлă), чĕри пит хавшак, çурăлса ан кайтăр. Арăмсăр йулас марччĕ.

Пытармасăр каласан, Васили арăмне питĕ йуратать. Хăш чухне Кулине ăна каççерен çынсем патне кайа-кайа ларнăран хытă та вăрçкалать, пир тукмакĕпе çурăмĕнчен тиверкеленĕ вăхăтсем те пулкаланă, анчах çапах Васили ăна çиленмест, хисепе хурса пурăнать. Çапла Кулине çинчен аса илсен Васили чăтаймарĕ, татах карташне тухса çил-хапхи урлă пăхать. Вилнĕ çын мĕлки çав вырăнтах çапкаланса тăрать. Сăхсăхса та пăхать Васили, кăшкăрса та пăхать, анчах мĕлке вырăнтан тапранмасть. Васили умĕнче икĕ задача: йе хăйне хăтарса Кулинене хăратса вĕлересси, йе Кулинене хăтарса вилнĕ çынпа çапăçса хăй пуçне хурасси. Пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем вĕçен кайăк пек вĕçме тытăнчĕç. Куççулне те тăкса илчĕ. Кулинене хăтарас шухăшпа кĕлет çумне халĕ çеç тăратса хунă вăрăм шертене илчĕ те урамала тухрĕ. Вăл мĕлке патне çывхармасăрах ăна çапса пăрахасшăн. Шертене тăсрĕ те пусрĕ мĕлке çине. Унтан ăна çаплах пусарса шерте тăрăх утса мĕлке патне çывхарать. Çитрĕ, тытрĕ хайхи мĕлкене. Васили пăхать... унăн аллинче çилпелен ыткăннă, кашта çине типме çакса хунă кӳршĕ Тийек Микулийĕ арăмĕн кипки çакăнса тăра парать.

Тиххăн Петĕркки.

# ПУСМĂРЛАСА

Польша сейимне суйланă чухне полицисем çынсене пусмăрласах суйлав урнисем патне сĕтĕре-сĕтĕре пычĕ.

(Хаçатсенчен)




— Ех, кахал! Суйлава пырасшăн мар!..

# Телейлӗ каҫ

(ПӖР ПАЙЛӐ ВОДЕВИЛ)

ВЫЉАКАНСЕМ:

1. НОСӐВ—служащи, хулари хватерте пурнаҫ, 35 ҫулта.
2. НОСӐВӐ—унӑн арӑмӗ. Хулари тумпа.
3. УХИН—колхозри коњух, 55 ҫулта.
4. МУХИН—пристањ ҫинче ӗҫлекен.

ДЕКОРАЦИ:

Пӳлӗм. Сылтӑм йенче алӑк, тултан кӗрекен. Сулахай йенче тепӗр алӑк. Варӗнче пысӑк чӳрече, сӗтел, пукан. Ҫтена ҫинче портретсем.

НОСӐВ. Виҫӗ ерне кӗтетӗп ӗнтӗ, пайан та килеймерӗ пулас.

УХИН. Кам килеймерӗ?

НОСӐВ. Арӑм. Хусана хырӑм кастарма кайнӑччӗ те...

УХИН. Мӗн пулнӑ апла?

НОСӐВ. Киста теҫҫӗ. Илтни?

УХИН. Мӗнле, мӗнле?

НОСӐВ. Киста.

УХИН. Илтмен.

НОСӐВ. Ҫавӑн пек чир пур.

УХИН. Чир? Чир йачӗ-и вара вӑл? Тур ҫырлахах, мӗн чухлӗ сӑмах пулӗ тӗнчере, мӗнле чир вӑл?

НОСӐВ. Кистапа аптрама пуҫласанах хӗрарӑмӑн хырӑмӗ карӑнма пуҫлаҫ.

УХИН. Ну-у?

НОСӐВ. Ман арӑмӑн та киста чирӗ пулмала.

УХИН. Тен водянкӑ чирӗ пулӗ?

НОСӐВ. Водянкӑ мар. Тухтӑрсем пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ.

УХИН. Тен, нимӗнле чир лекмесӗрех ӳсе пуҫланӑ пуљ?

НОСӐВ. Тем пекехчӗ те, пулмаҫ-ҫке. Вунвиҫӗ ҫул пӗрле пурнатпӑр ӗнтӗ, пӗр ача та пулман.

УХИН. Манӑн акӑ вӑтӑр ҫул хушшинче вуникӗ ача пулчӗ, тӑваттӑшӗ вилчӗҫ, саккӑрӗшӗ пурнаҫҫӗ-ха, чиперех. Аслисем, иккӗшӗ армине кайса килчӗҫ ӗнтӗ.

НОСӐВ. Апла есӗ преми те илтӗн пуљ?

УХИН. Илмесӗр. Илтӗм. Тавта пуҫах ку саманана. Тем пек ҫӑмӑлӑх пулчӗ вӗт, тӑван атте хатӗрлесе хӑварни те ун чухлӗ хаклӑ пулас ҫук.

НОСӐВ. Шел! Манӑн вӑт, ачасем темшӗн пулмаҫҫӗ. Виличчен пӗр ача курасчӗ, тем пекех савӑннӑ пулаттӑм. *(Паузӑ)*. Есӗ халљ те коњухрах пурнатни-ха?

УХИН. Ҫавӑнта.

НОСӐВ. Аван. *(Астуса)*. Да, тӑхӑр сехетре пӑрахут пулмала, епӗ пристӑне кайса пӑхам-ха, тен, арӑм шӑп ҫак пӑрахутпа килсе ҫитӗ.

УХИН. Кайса пӑх. Епӗ ларкалӑп.

НОСӐВ. Виҫӗ ерне хушши ӗнтӗ кашни пӑрахутах кайса пӑхатӑп-ҫке. Пӗрре, каҫхине, ҫумӑр ҫӑваҫ... пылчӑк... Водосветӑн машинӑ пӑсӑлнӑ иккен... ҫутӑ ҫук... аран-аран... тӑват уран, киле ҫитрӗм. Киле ҫитсен те ырри ҫук. Вӑрманти тунката пекех ларатӑн вара. Ни санӑнни пек ачапӑча ҫук, ни арӑм ҫук, йураҫ халљ кӗҫӗр есӗ кӗрсе выртрӑн.

УХИН. Каҫа хирӗҫ килтӗм те, ӑҫта кайас, Хресчен ҫуртӗнче вырӑн ҫук, терӗҫ. Ну, вара, хамӑр йал ҫынни патне, Сӑмса Улатимӗрӗ патне кӗрес терӗм.

НОСӐВ. Есӗ лашапа-и?

УХИН. Лашапа. Пуљницӑна килмеле килес терӗм те...

НОСӐВ. Мӗн пулчӗ апла?

УХИН. Есремет качаки, кӗҫех алла хуҫатчӗ. Кӗҫӳ кӳртсен, ман Матрӳн ӗнесене курӑк ҫулса панӑ пулнӑ. Пирӗн сурӑхсем хыҫҫӑн колхоз таки „Муркӑ“ та кӗнӗ пулнӑ. Ман Матрӳн, курӑкне сапалатса пама пӗлмен, пахчаран илсе тухнӑ та лашт пӑрахса панӑ. Ҫикелетчӗҫ, чиперех. Унччен те пулмарӗ, пуҫларӗҫ ман ӗнепе колхоз таки тӗкӗшме. Тур чунилтӗрех. Ну, халтлаттараҫҫӗ. Таки те ҫав... пилӗк-ултӑ метр кайала чакаҫ те... тӳрех ӗне ҫамки ҫине. Ӗни, такаран ӑслӑрах виднӑ, така пек чакса хӑтланмаҫ, тӳрех, такана карта ҫумне хупӑрларӗ те лартрӗ. Ну, тӑрмашаҫҫӗ... Кусем капла суранласа та пӗтӗҫ, терӗм, йапӑр-йапӑр пӳртумӗнчен ҫулкӑ илтӗм те, пуҫларӑм хӑвалама... Аран-аран уйӑрса йатӑм. Киљкарти алӑкне хупрӑм та, сӑлап хураси, мӗни... сӑлап хума, така вӑл, ҫын мар-ха, ҫеклине уҫсах кӗреймӗ-ха, тесе, шухӑшласа тӑратӑп. По-оннн!.. тутарчӗ те, килкарти алӑкӗ уҫӑлнипе мана ша-ан! тутарчӗ те, пӗр виҫ метр пулӗ тӑрнт! сирпӗнсе кайрӑм.

НОСӐВ. Таки ӑҫта?

УХИН. Таки—топ! килкартине кӗрсе тӑчӗ. Ман, пилӗк тӗлӗнчен те, алӑ та, чӗтма ҫук ыратаҫ. Ҫиленсе кайрӑм, тӑтӑм та... ҫулкӑпа патӑм пӗрре такана. Ҫемҫе йапалапа ҫапни—ӑна вӑрҫтарни ҫех пулчӗ. Така ҫиленчӗ те, сӑмсипе мӑрт-март! тутарчӗ. Епӗ хӑранипе вӑшт-вашт ҫенӗхе, така ман хыҫҫӑн... пӳрт алӑк хӑлӑпӗнчен тытрӑм ҫех, ҫенӗх алӑкӗ шолтрр! йатӑнса анчӗ. Епӗ пӳрте кӗрсе тартӑм та тӳрех кӑмака ҫине. Пӑхаҫ така, ҫенӗхре никам та ҫук. Пуҫлаҫ вара ӗлӗкхи „ҫӗн салтак“ пек утма. Ҫур сехет утсан—тин тухса кайрӗ.

НОСӐВ. Аллуна ӑҫта ыраттарнӑ ес?

УХИН. Вӑт ҫав... килкартинче уткӑнса кайнӑ чух. *(Пӑрахут сасси)*.

НОСӐВ. Ну, пӑрахут килчӗ. Сан йумахна пула... *(кайма тӑраҫ)*. Ах, да, есӗ никама та ан кӳрт, асту!

УХИН. Кам килет ҫӗр хута?

НОСӐВ. Нумай пулмаҫ, кунта, кӳршӗсенне пӗр йӗп йулмиччен тасатса кайнӑ. Кунта тӗрлӗрен ҫынсем пур. Атӑл лараччен.

УХИН. Атӑл лариччен, тек, хуларан хулана ҫӳреҫҫӗ пуљ ҫав. Кунта чӑнах хӑрамала. Епир, йалта сайра питӗрсе выртатпӑр.

НОСӐВ. Ну, йурӗ. Еп васкатӑп. Ме сана уҫҫи. Еп килмесӗр никама та ан кӳрт. *(Кайаҫ)*.

УХИН. Вӑррисем кашни каҫах ҫӳремеҫҫӗ пуљха... Тухса лашана апат парас та, унтан ҫывӑрма та йураҫ. Кайса пӑхас... „Змейкӑ“ пӗччен тӑрса та йӑлӑхрӗ пуљ. Ох, йурататӑп еп лашасене! Алӑкне тултан питӗрес. *((Кайаҫ)*.

НОСӐВА *(сасси)*. Вовӑ, Вовӑ! *(Чӳречерен ша-*

*ат).* Уç! Епир килтĕмĕр. Вовă çывăратни? *(Алăкĕ çăрапа уçса кĕрет, аллинче ача).* Йурат хам умра уçă пур. Вăт, кĕтсе тăр вăл килессе. *Алăкала).* Кунта, кунта! *(Мухин кĕрет, аллинче чемодан).*

МУХИН. Килменни питĕ нумай пулат те, манна кайнă.

НОСĂВĂ. Ывăнтăн пулĕ, чемоданне лартах.

МУХИН. Ăна вырнаçтарăпăр-ха. *(Лартат).*

НОСĂВĂ. Ăçта кайса çухалнă-ха?

МУХИН. Ну, укçине паратăр пулĕ, ман васамала.

НОСĂВĂ. Манăн çумра укçа çук çав. Упăшка киличчен кĕтетĕр пулĕ.

МУХИН. Укçу çук пулсан пристăнь çинчех ларалаччĕ санăн. Епĕ ыттисенне çĕклесе кайнă пулăттăм. Хаљ ĕнтĕ сан упăшку килессе кĕтсе ларала-и?

НОСĂВĂ. Тархасшăн кĕтĕр.

МУХИН. Санăн упăшку, тен, тул çутăлсан тин таварнат. Манăн мĕн чухлĕ ĕçлесси йулат.

НОСĂВА. Мĕн тума пултарăп-ха епĕ. Хĕрхен есĕ мана. Епĕ пристăнь çинче пĕчĕк ачапа шăнса вилнĕ пулăттăм.

МУХИН. Санăн улталама кирлĕ марччĕ.

НОСАВĂ. Мĕн ултавĕ пулчĕ-ха ку?

МУХИН. Улталамастăн пулсан кӳр укçа!

НОСĂВĂ. Кĕтсе лар кăштах, епĕ сана уншăн кăшт хушса парăп.

МУХИН. Хушса парсан татах хăт.

НОСĂВĂ. Нумайах тăрас çук, килет. Епĕ çак ачана малти пӳлĕме вырнаçтарам-ха. (*(Ачине).* Ну-ну-ну!.. ан макăр... Е-е-е-ех! *(Малти пӳлĕме кĕрет).*

МУХИН. Ек-кей, пăххалĕ, кĕтмелле пулчĕ! Тен кайарах кĕрсе тухас. Тунас çук. Чăнах. Кĕрсе калаçас та ĕçе кайас. *(Малти пӳлĕме кайат. Ухин кĕрет).*

УХИН (*хăраса*). Кам уçнă кăна? Чиперех питĕрсе хăвартăмçке. Йурат хаљ никам та килсе кĕреймен. Пĕр-пĕр вăрă, килсе çакланнă пулсан, хупланас пулат, пĕтĕмпех. Пăхаљ, аран чĕре лăпланчĕ. (*Ларат*).

МУХИН (*сасси*). Укçине кайран паратăн еппин?

УХИН. Мĕн? Кам унта? (*Итлет*). Шалта сасăсем. (*Хуллен пырса итлет*) У-у-у... укçа çинчен калаçççĕ. Вăрăсем вĕт, кусем? Вăрăсем. Пĕтрĕ пуç! Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ ман. Мĕнле çăлăнса йулас? Çук, хăрама йурамаст. Тытас пулат.

МУХИН (*кĕрет*). Халех.

УХИН (*пӳлсе*). Стой! Мĕн тума килнĕ ес кунта?

МУХИН. Сана мĕн?

УХИН. Йепле сана мĕн?

Стой, ан çывхар! Еп сана хаљ, хуçи киличчен ниçта та йамастăп.

МУХИН. Есĕ мĕн ухмаха йертĕн-и? Кам вырăнне хутăн ес мана? Еп кунта чемодан çĕклесе килтĕм вĕт.

УХИН. Мĕнле чемодан? Камăнне?

МУХиН. Акă чемоданĕ. Пĕр ачалă арăм çĕклеттерсе килчĕ.

УХИН. Кам арăмĕ вăл?

МУХИН. Çак квартирантăн пуљ.

УХИН. Çук, ку квартирантăн арăмĕ ача тумаст. Ес мана кунта суйса улталас терĕн-и? Çук. Епир пĕлетпĕр сире, вăрăсене...

МУХИН. Кам, епĕ вăрă-и?

УХИН. Вăрă пулмасăр. Питĕрнĕ çĕре мĕн тума уçса кĕтĕн, а? Бандит!

МУХИН. Еп бандит-и?

УХИН. Бандит пулмасăр.

МУХИН. Ĕненместĕн пулсан халех майрине чĕнсе тухатăп.

УХИН. Есир пурте пĕр шутлă, пурте вăрăсем

МУХИН. Вăт ухмах старик! (*Малти пӳлĕме кайат.*)

УХИН. (*хуллен*). Кусем хама та вĕлерсе кайĕç. Мĕн тăвасши? Мана вĕлерсен, ман Матрӳн хуйхăрсах вилет вара. (*Паузă*). Питĕрес, питĕрес! Ларччăрр хуçи киличчен. (*Питĕрет*). Те хурах кăшкăрас? (*Алăка уçат те*) Хурах! Хурах! Хурах! (*Алăка хупат*). Кам та пулин илтрĕ-ши? Хăвартрах хуçи килесчĕ.

МУХИН (*шаккат*). Уç!.. уç тетĕп!

УХИН. А-а, лекрĕри?.. Кунтан тӳрех тĕрмене ĕнтĕ сире. Илтрĕни? (*Паузă*). Ох, чĕре сиксех тухат. Йурат хаљ алăкне питĕрме ăс çитрĕ. Унсăрăн аптрашки вĕсемпе. Вот, шуйтансем, питĕрнĕ алăка уçса кĕнĕ. (*Аса илсе*) У-у... тулта татах виççĕн-тăваттăн пуљ-ха. Кунти алăкне те питĕрес. (*Питĕрет*). Хаљ ĕнтĕ хуçи киличчен ниçта та тапранмастăн.

НОСĂВ (*тултан алăка шаккат*). Уç!

УХИН (*хăраса чакат*). Вăрă! Чăнах вăрă! (*Пытанат*).

НОСАВ (*сасси*). Еп, уç хăвăртрах!

УХИН (*хăраса*). Кам ес?

НОСĂВ. Сана çавах мар-и мĕн?

УХИН. Хуçи никама та кӳртме хушмарĕ.

НОСĂВ. Епĕ хуçи пулатăп.

УХИН. Суйатăн. Сан пек хуçасем малти пӳлĕмре те пур.

НОСĂВ. Ну, есĕ уçатни, уçмастни?

УХИН. Ыран кил.

НОСĂВ. Ухин, шуйтан, ухмаха йертĕни? Уç!

УХИН. Кам ара ес?

НОСĂВ. Епĕ, Сăмса Олатимĕрĕ.

УХИН. Чăнахи?

НОСĂВ. Чăн пулмасăр.

УХИН (*хуллен пырса уçат*). Кĕр.

НОСĂВ. Есĕ мĕн хăтланатăн?..

УХИН. Ш-ш-ш!.. Вăрăсем.

НОСĂВ. Ăçта?

УХИН. Малти пӳлĕмре.

НОСĂВ. Ну-и?

УХИН. Чăнах.

НОСĂВ. Мĕнле лекнĕ?

УХИН. Çăрана уçса кĕнĕ.

НОСĂВ. Есĕ ăçта пулнă?

УХИН. Лаша тăвартăм.

НОСĂВ. Нумайăни?

УХИН. Пĕрине куртăм, ыттисем шалта.

НОСĂВ. Мĕн тăвас-ха?

УХИН. Тем тумала.

НОСĂВ. Милицине чĕнес.

УХИН. Чĕнес.

НОСĂВ. Кайса чĕн.

УХИН. У-у, епĕ хăратăп. Вĕсем пĕччен мар... Вĕсем урамра та...

МУХИН. Ей, вы, мĕн тума питĕртĕр?

НОСĂВ. Ш-ш-ш! Ан чĕн!

УХИН. Йурат. Шалта унта хĕрарăм та пур.

НОСАВ. Ну-у?

УХИН. Хĕрарăмĕ ачалла, тет.

НОСĂВ. Йури, çынсем ан иккеленччĕр тесе, ача пек туса йăтса çÿреççĕ.

МУХИН (*сасси*). Ей, старик, есĕ уçатни-уçмастни? Нумайрах çилентерсен еп сана пĕрре çапнипех лапчăтатăп.

УХИН. Есир ăна тума ăста ĕнтĕ. Хăвăн ĕмĕрĕнте пайтах...

МУХИН. Епĕ санпа шÿт тумастăп.

УХИН. Тухса пăх-ха кунтарах.

МУХИН. Уçмасан епир кантăк витĕр те кайма пултаратпăр. Уçăр.

НОСĂВ. Ниçта та кайаймастăр, сире пур йенчен те çавăрса илнĕ. Халех милиционер килет.

МУХИН. Ей, хуçи майри, сан çак алăка уçакан уççи пури?

НОСĂВĂ (*сасси*). Пур, пур. Мейĕр!

МУХИН. Халех. (*Çăрапа уçнă сасă*).

УХИН. Шалтан уçса тухаççĕ.

НОСĂВ. Турчăка ил. Епĕ ухватпа. Хатĕрлен. (*Хатĕрленсе тăраççĕ*). Тухнă тухманах йара пар пусĕнчен. Епĕ уринчен. (*Малти пÿлĕм алăкĕ уçăлат. Çапма хатĕр тăраççĕ. Алăк йар-р уçăлнă майăн Носăвă кĕрет те алăк патĕнче тăрат. Носăвпа Ухин тĕлĕнсе хытса тăраççĕ те, кайран аллисене йерипен антараççĕ.*) Машă!.. (*Ухватне пăрахат*).

НОСĂВĂ. Вовă... (*ыталаса чуп тăваççĕ*). Мĕн пулнă сире?

НОСĂВ. Епир вăрăсем тесе...

НОСĂВĂ. Ну, вăт ухмахсем!

НОСĂВ. Операци мĕнле?

НОСĂВĂ. Пит аван иртрĕ.

НОСĂВ. Нăмай касрĕç-и?

НОСĂВĂ. Нимĕн те касман. Ахалех кăларса илчĕç. Епĕ ăна киле илсе килтĕм. Питĕ йавăр тайрĕ тăвата кило.

НОСĂВ. Тăвата кило? Мĕнле йапала вăл?

НОСĂВĂ. Халех кăтартатăп. (*Кайат*).

НОСĂВ. Нихçан та курман йапала.

НОСĂВĂ (*кĕрет, аллинче ача*). Акă, чĕрĕскер!

НОСĂВ. Неушлĕ ача?

НОСĂВĂ. Тытса пăх.

НОСĂВ. Ача, ача, ача!.. Ухин, киста чирĕ пулман. Мĕнле савăнăç. Ухин, пăх-ха, манăн та ача пур ĕнтĕ, манăн та. (*Мухин кĕрет*).

НОСĂВĂ. Вовă, çак носиљшчике 5 тенкĕ укçа парса йар-ха.

МУХИН. Виç тенкĕ çех. (*Носăв укçа парат.*) Тавта пуç! (*Кайат*).

НОСĂВ. Еп хам та хирĕç пытăм, ĕлкĕреймерĕм. Ачи мĕнле, ывăл-и, хĕр-и?

НОСĂВĂ. Ывăл.

НОСĂВ. Ывăл. Ух-ти! Йепле телейлĕ каç! (*Малти пÿлĕме кайаççĕ*).

УХИН. Вăт тăк вăрă тытрăм!

(ЧАРШАВ).

# Çемçе кĕлĕллĕ атă

Епĕ ată-пушмак сутакан магазинра 42-мĕш номĕрлĕ ботинкă урана йурăхлипе йурăхлă маррине виççе ларнă хушăра, магазина упăшкипе арăмĕ пырса кĕчĕç. Арăм патмарскер, хĕп-хĕрлĕ сăнлăскер. Арçынĕ тĕксĕмскер, пуçне çĕреле усса арăмĕ хыççăн утакан скер.

— Ată пар-ха!—кăшкăрса каларĕ хĕрарăмĕ.

Арçынĕ нимĕн те чĕнмерĕ, кăсйинчен пирус кăларчĕ те, çăварне хыпрĕ.

— Кам ваљљи?—ыйтрĕ продавец.

— Çакна ваљљи. Пăрах ĕнтĕ пирусна... килсем кунтарах!

Арçынĕ малала пырса тăрат.

— Мĕнле йышши ată кирлĕ сире?

— Кавказски текенни çук-и? Ăслă çынсем: вĕсен подметки çÿхе те çемçе, тесе кларĕç.

— Çук. Ахаљљи пур. Парас-и?

Продавец пĕр купа ată кăларса парахат. Хĕрарăмĕ чылай вăхăтчен суйласа тăрат те, ассăн сывласа калат:

— Йавăртарах... Çирĕпрех. Кун пекки йурамаст.

Упăшки, кирек мĕнлине илсен те йурат тенĕ пек, ним интересленмесĕрех ată çине пăхат.

Продавец таварне мухтат.

— Ак ată та. Фасонĕ те лайăх, çирĕппине те çирĕп. Подметкине тытса пăх-ха: чул пекех вĕт. Тимĕр тейĕн.

Арăмĕ продавец çине сиввĕн пăхса илсе, кăшкăрса йанă пекех хыттăн калат:

— Санран çирĕп кĕлĕллине ыйтмаççĕ, çемçерех те çÿхерех кĕлĕлли кирлĕ.

Продавец хулпуççисене силлесе калат:

— Тĕлĕнтертĕр мана есĕр. Кашни етем çирĕпреххине илесшĕн. Есĕр çемçине ыйтатăр,—тет

— Санăн ăнланса илмесен те йурат,—тет пÿлсе арăм.—Есĕ ăнланаймасассăн та, çавă ăна пит лайăх ăнланат,—тет упăшки йеннеле сиввĕн пăхса.—Пайан ирхине ман çине, темшĕн вара, çиленнĕ те, мана ată кĕллипе тапса çамкаран ыраттарчĕ. Пăхсан лăпкă етем пек курăнат хăй, килте тискер кайăкран та усалрах. Анчах тÿрех калас пулат, ытти йапалапа çапмаст, ată кĕллипе те пайан çеç тапса йачĕ... анчах ун пек татах хăтланасран шикленмеле. Çавăнпа ăна ваљљи çемçерех кĕлĕллĕ ată илсе парас шухăш тытрăм...

— Ată тăхăннă чухне, тем шырама пĕшкĕнне те хăй. Хам курман... Асăрхаман... Йатарласа тапманчĕ те,—терĕ арçынĕ, пуçне тата айаларах усса.

Арăмĕ продавеца:

— Апла пулсан мана кирлĕ ată пулмарĕ сирĕн магазинра. Çук пулсан, тепĕр магазина кайма тивет,—терĕ те, упăшкине çаннинчен йарса тытса магазинран çавăтса тухрĕ.

Продавец, вĕсем алăкран тухса кайнă-каймах, чăтайманнипе, кулса йачĕ. М.

# Гитлерăн сĕлехе йухаť

Харлампийĕв ўкерчĕкĕ.




Куç кураť те, шăл витмест.

# Кашкӑрсем

Пите тӳрех хайар, сиве ҫил кастарать. Ӑшӑнас шухӑшпа Амвроҫи пуп ҫур литр кӑларса анинчен лӑнкӑртатса ӗҫрӗ те, йулашкине лавҫа парса ӗҫсе йама хушрӗ. Тата улт-ҫич километр каймала. Йал курӑнмасть. Каҫ пулчӗ. Ҫул хӗрринчи тӗмескесенчен хура ӗмӗлкесем шӑвӑнма тытӑнаҫҫӗ.

Лавҫӑ Йакур сехри хӑпса тухнипе, лашине пӗр май ҫурӑмӗ тӑрӑх тивертме тытӑнать. Тивертнӗ май пупа йӑлӑнать:

— Таса аттем, турра кӗлту есӗ! Ӑхалӗн пире кашкӑрсем ҫисе йарӗҫ.

— Турра кӗлтума кайран та ӗлкӗрме пулӗ-ха,— тет пупӗ.—Пӑшал хурса тухнӑ пулсан хӑрамастпӑрчӗ те. Пӑшал вӑл хирте-мӗнте кадилӑ пекех усӑлӑ хатӗр.

Кашкӑрсем ҫывхарнӑ ҫемӗн ҫывхарса килнине кура, лавҫӑ пупа йӗре-йӗре тенӗ пекех йӑлӑнма тытӑнать:

— Кӗлтусамччӗ, итлесемччӗ,—тет.

— Йурӗ,—тет ӑна хирӗҫ пупӗ. Пурттуна парха. Хам тытса ларам. Пуртӑ вӑл уйра тапӑнакансенчен хӑтӑлма хӗрес пекех пулӑшать. Кашкӑр ҫамкинчен пуртӑпа хӗреҫ хурсан, ҫынна тапӑнайми пулать вӑл.

— Ай, тур ҫырлахах,—йанӑшса илет лавҫӑ Йакур.—Тархасшӑн турра кӗлтуса кашкӑрсене вӑрманала йар. Кӗлтусан, турӑ пулӑшатех. Вӑл пурне те пултараканскер, пире кашкӑрсенчен хӑтарӗ.

— Турӑ ҫине шанассине шан та, анчах ху та ахаљ ан лар, тенӗ ваттисем,—тет ӑна хирӗҫ пуп,— Лашуна хӑвӑртрах хӑвала.

— Ай, таса аттем! Вилес умӗн ҫылӑхӑмсене каҫарттарасчӗ.

— Ӗлкӗрӗн-ха. Пуртӑ алрах, куратӑн? Пуртӑсӑр пуҫне ҫивӗчрех ҫӗҫӗ пулсан та ытлашши марччӗ те... Пур-и сан ҫӗҫӗ?

— Ҫӗҫӗ чиксе тухман. Ай, пачӑшкӑ, каҫарсамчӗ ҫылӑхӑмсене!

— Ҫылӑх каҫарассипе аппаланма вӑхӑт ҫук-ха. Куратӑн—кашкӑрсене хирӗҫ тӑмала.

— Усала хирӗҫ ан тӑр, тенӗччӗ пулас та йеванкӗлире,—тет пупа Йакур.—Ҫылӑхӑмсем вӗҫӗмсӗр нумай, каҫарса йарсам ӗнтӗ, пачӑшкӑ! Каҫарттармасӑр вилессӗм килмест.

— Тӗрӗс, ҫылӑх каҫарттармасӑр вилни аван мар,—тет кӑштах шухӑшлакаласа илнӗ хыҫҫӑн хайхи пуп. Апла пулсан ҫапла тӑвӑпӑр: епӗ кӗлӗ сӑмахӗсене ӑшӑмра каласа пырӑп. Есӗ лашуна ҫине-ҫинех ҫурӑмӗнчен тивертсе пырӑн. Кайала ҫавӑрӑнса ан пӑх... Калама маннӑ: турӑ пулӑшнипе ҫак кашкӑрсенчен хӑтӑлсан, пӗр мишук ҫӑнӑх тата 50 тенкӗ укҫа парӑн. Чиркӳ ваљљи. Килӗшетни? А?

— Ай уй, ма килӗшмеле мар! Килӗшетӗп-ҫке. Ним те шел мар. Ҫӑлӑнса йуласчӗ кӑна.

Кашкӑрсем кӑштах йурткаласа ҫӳренӗ хыҫҫӑн, кӑсене тапӑнмасӑрах, хыҫалала тӑрса йулаҫҫӗ. Килне таврӑнсан, Амвроҫи пуп кашкӑрсене пула „ӗҫлесе“ илнӗ 50 тенкӗ укҫине тата пӗр мишук ыраш ҫӑнӑхне матӑшкине парать те:

— Пӑшал пулмарӗ,—тет.—Пулнӑ пулсан, кашкӑр тирӗсӗр нимӗнпе те таврӑнас ҫукчӗ, Кавиртума шутсӑр аван пулатчӗ. Тепринче Йаван ухутникрен пӑшал илсе кайма манас мар-ха.

И. Д.

# Кӑмӑллӑ калаҫни

Б. Анфилӑв ӳкерчӗкӗ
(Бӳро-клише ТАСС)



**ФРАНЦУЗ ИТАЛЙАНЦА. Айӑп ан тӑвах, ман ура сан уру айне пулнӑ...**

# Хуйхӑпа

— Ма, Иванов, ӗҫе пӑрахсах ӗҫен пайан есӗ?
— Пысӑк хуйхӑ пулчӗ.
— Мӗнле хуйхӑ ара?
— Ӗнер 77 тенкӗ укҫана пӗр пус хӑвармичченӗҫсе йанӑ, ҫав хуйхӑпа ӗҫетӗп.

М. Аркай.

# Пуҫа кӗнӗ шухӑшсем

Общчӗствӑлӑ кухњӑ плитаран лайӑхрах, плита примусран лайӑхрах, примус ним ҫукран лайӑхрах.

Санран член укҫи те илмесен, есӗ Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен союзӗ членӗнче тӑнине ӑҫтан пӗлӗн-ха?

Айван ҫын пуҫне те, айван ӗҫ туса хунӑ хыҫҫӑн ӑслӑ шухӑш пырса кӗме пултарать.

Пуш пуҫлӑ ҫынсем пуш параппан ҫапасшӑн каҫсах кайаҫҫӗ.




## Маяк лартасси

Пĕр йалсовет председателĕ хăй ĕçĕсене ӳрĕк-сӳрĕк туса пынипе паллă пулнă. Çавскер пĕрре халăх пуххи пухтарнă. Çулсем çине майак лартасси çинчен доклад туса панă. Унтан:

— Кам çул çине майак лартма ыранах тухас тет—аллăрсене тăратăр!—тенĕ.

Пухха пухăннă колхозниксемпе йединоличниксем пĕр-пĕрин çине чăр пăхса илнĕ те... лăхăллăхăл кулса йанă.

— Майак лартассине хирĕç-и есĕр? Ал тăратма шухăшламастăр, тесе вăрçса тăкнă вĕсене председателĕ.

— Мĕн кăшкăратăн? Иртнĕ ернерех майак лартса тухрăмăр, есĕ тин аса илнĕ. Ех, есĕ те çав!—тесе вăрçса тăкнă ăна хирĕç пĕр колхозник.

## Учотчик хушамачĕ

Малтикас Шĕкĕрти „Хĕрлĕ Сухаç" колхозра (Шăхасан районĕ) кăçал 5 учотчик улăштарчĕç.

(Д. М. Иванов).

— Сирĕн учотчик мĕн йатлă?

— Пайан—Павлăв, ыран тем йатлă пулаť.

## Çĕнçул çине

— Çĕнçула кĕтсе илес тĕлĕшпе тухнă расхутсене кам çине çырса хурас?

— Кам çине? Çĕнçул çине.

## Йумăç патĕнче

— Асанне, вар ыратаť. Сиплесе памăн-ши?

— Хађ йершместĕп; хам та варпа аптрарăм, тухтăр патне васкатăп.

## Суйма хăтланаканскерсем

— Ман шутпа пирĕн ертел кăçалхи плана 100 процент тултарнă тухаť.

— Ман шутпа 100 мар, 114 процент.

— Ма сан цыфри манчен нумайрах тухнă-ха?

— Мĕншĕн тесен есĕ цыфрсене мăччаран илнĕ, епĕ—крышă çинчен.

## Кĕнекешĕн çунакансем нумайланаççĕ

Кĕнеке магазинĕ умĕнчс виçĕ çын витринăри кĕнекесене пăхса тăраççĕ. Вĕсем тăнине курсан, пĕр айакрарахран иртсе кайакан çын, сасартăк чарăнса тăрса:

— Мĕн ку çынсем,—тет,— ахаљ пăхса тăраççи йе кĕнеке туйанма черете тăнă? Черете тăнă пулсан, манăн та йулас мар. Кайса тăрас. Пĕр-пĕр паха кĕнеке килнĕ пулас.

## Ахалех пĕлме пулаť

— Авал çапла калаťчĕç: çĕнçул каç сурăхсен картине кайса, пĕр сурăх майне курăспа çыхмала. Ирхине ăна кайса пăхмала. Сурăхĕ ырхан йе самăр пулсан, упăшка йе арăм пуласси те çав сурăх пекех пулаť, тетчĕç.

— Халĕ ун пек аппаланма май килмест.

— Ма?

— Пирĕн картари сурăхсем пурте самăр та, ырханкки пĕре те çук та, курăспала çыхса аппаланмасăрах сурăхĕ самăр пуласса пĕлме пулаť.

## Йут çĕршывсенчи калаçусенчен

### Германири вулакан

— Пирен инкене çĕнĕ романшăн 5 çуллăха хупса лартнă.

— Писатĕл-и мĕн вăл?

— Писатĕл мар, вулакан.

### Франко штабĕнче

— Фу, сăмсана Испани халăхĕ шăрши кĕчĕ.

— Çакса йе персе вĕлерес.

— Мĕне?

— Шăршине.

### Дипломатсен лабораторинче

— Щелочь ырăнне акăлчансен планне илетĕп, кислота вырăнне—италйанĕцсем ăнлантарса панине (комментарисеңе) илетĕп... Вара...

— Вара мĕн тухаť?

— Вăтаçĕр тинĕсре Германи крейçĕрĕсем çӳрени.

### Гитлĕр тухса каланă хыççăн

— Арăслан тирĕ урайне сарма пит аван пулмала.

— Ма?

— Британи арăсланĕ тирĕнчен Гитлĕр хăйĕн урайне сармала кавир тăвасшăн.

### Хупăнаççĕ

— Сирĕн Германире театрсем нумай хупăннă. Ма вăл?—Паллах ĕнтĕ—правителĕствă: граждăнсене театрта ма лартас, концлагĕрсенче лартнипе те çитет тенĕрен.

# Пур-ха ҫакӑн пеккисем те

*ИВАН АРА*

Вӑхӑт ирхи апатала ҫитсен, Айалкасри Куҫма, витӗнмелине сирсе пӑрахрӗ те тӑчӗ. Вара, ним тума аптӑраса, сӗтел умӗнчи хыҫлӑ тенкел ҫине пырса ларчӗ. Сӗтел ҫинче чернил кӗленчипе йунашар пӗр аҫмушкӑ тапак ларать. Мӗн тӑвасси пур? Вӑл йаланах ҫапла, вырӑн ҫинчен тӑрсан, ним тӑвиччен малтан пӳрте сӗрӗм тултарма вӗреннӗ. Ҫавӑнпа та вӑл сӗтелӗн пӗр кӗтесӗнче выртакан райхаҫатӑн ҫуррин ҫуррине ҫурса илчӗ те, ӑна, тапак хурса чӗркемелӗх пуличчен, айӑкисенчен ҫурса тикӗслерӗ. Вара,—ку ӗнтӗ нимле ӑнланмала мар пулса тӑчӗ,—аҫмушкӑран тапак илеп, тесе, виҫӗ пӳрнине чернил кӗленчи ӑшне чиксе йачӗ. Сисмеле пек ӗнтӗ, чернил мӗн иккенне пӗлмеле пек пӳрнисем. Ҫук. Ӑҫта пулчӗҫши унӑн саккӑр сӑвакан куҫӗсем? Елле вӗсем таҫта тула тухса кайнӑ? Вӑл чернил ӑшӗнчи тахҫанхи шӑнасене пӗр чӗптӗм ватӑрласа кӑларчӗ те, хучӗ ҫине хурса, пикенсех чӗркерӗ. Ҫӑварне хыпрӗ. Шӑрпӑк тивертсе паклаттарма пуҫларӗ. Чылайччен паклаттарчӗ, чыкарки ҫапах тивмерӗ. Шӑрпӑкӗсем ҫур карупка ытлашшипех пӗтрӗҫ пулсан та чылайччен шӳсе выртнӑ шӑнасем типсе ҫитеймерӗҫ пулас. Йулашкинчен, вӑл ӑна ҫӗклесе ҫапрӗ. Урайне пӗр чыкаркӑ шӑна лачлатрӗ.

Куҫма тепӗр пӳртне тухрӗ. Унта арӑмӗ урамран тин ҫеҫ выӆаса кӗнӗ ачисене ҫӑкӑр чӗлли ҫине турӑх сӗрсе парать. Арӑмӗ ун ҫинеле пуҫне ҫӗклерӗ те ҫӑварне карса пӑрахрӗ:

— Мӗн пулнӑ сана?—ыйтрӗ вӑл.

— Мӗн?

— Ҫӑвару чернил кӑна та.

— Ӑҫта-а?

— Ӑвӑ, пӑх-ха куҫкӗски ҫине.

Куҫкӗски ҫинче чӑнах та унӑн халиччен ҫӑварӗ мар, пайан ирпе шӑнасене тутанса пӑхнӑ ҫӑварӗ курӑнчӗ.

— Фу-ти... ачасем айланнӑ пуӆ ӗнтӗ... йӗрӗнчӗк!—паҫӑрах тухмали сурчӑкне тин ҫеҫ сурса пӑрахрӗ. Вара сентӗре ҫинчен шур пӑрашук илчӗ, шчеткӑ, ҫӑмарта тӗслӗ супӑӊ. Кун хыҫҫӑн лахан ҫине те, лахан айӑккине те шыв шапӑртатма пуҫларӗ. Вӑл мӗнле ҫӑвӑннине пӑхсан, тата паҫӑрхи шӑнасем ҫинчен мансан, ӑна чӑнласах та куӆтурӑна чухлакан ҫын темеле. Ҫапла калӑпӑр. Анчах лахан айӑккинчен урайне супӑнлӗ те пӑрашуклӑ шыв йухса тухнине курсан, мӗн темеле-ши вара? А вӑл темӗскер мар, ун пеккине арӑмӗ ирсеренех шӑлса типӗтет.

Ҫак вӑхӑтра ӑна малти пӳрчӗн чӳречинчен килсе шаккарӗҫ. Пилӗк ҫулхи ачи, турӑхпа варланса пӗтнӗскер, унта чупса кӗчӗ те:

— Атте!—терӗ вӑл ашшӗне,—сана йайсовет канчлейайне чӗнеҫҫӗ. Канасиу пуйать,—тет.

— Ҫӑвӑнать те,—терӗ ӑна ашшӗ. Ачи мӗнле кӗнӗ ҫаплипех урамала чупса тухрӗ.

Куҫма, йулашкинчен, ҫӑвӑнса пӗтерчӗ. Шӑлӑнса типӗнме тепӗр пӳртне кӗчӗ. Анчах алшӑлипе шӑлӑнса ҫатӑр пуличченех типӗнес тесен, ӑна сахалтан та виҫӗ сехет кирлӗ. Ҫӑвӑннӑ чухне вӑл хайхи шӑнасенчен пӗрре те кайа мар лӳшкенчӗ. Ҫапах та питсене те пулин типӗтес пулать. Унӑн ҫавӑн пек йӑли пур, йаланах вара куҫкӗски ҫине тирпейлӗн пӑхкаласа шӑлӑнать. Вӑл сӗтел ҫинчи куҫкӗски патне утрӗ. Ҫакӑнта вара Куҫма умне пӗр пысӑк кӑна инкек сиксе тухрӗ.

— Мӗн пулчӗ?—часрах сиксе кӗчӗ арӑмӗ, кӗмсӗрт тунӑ сасса илтсен. Упӑшкин кӳлепи урайӗнче тапаланса та хӑлаҫланса выртать.

— Мӗн шуйттанӗ пӑрахса ҫӳретӗр. Ура шуса кайрӗ те лачах персе антӑм!—тесе йатлаҫать хӑй.

Арӑмӗ шӑпӑр тухса илчӗ.

— Ара, есӗ чикаркӑ ҫине шуса ӳкнӗ вӗт,—терӗ вӑл, урайне шӑлма тытӑнсан.—Мӗншӗн ҫав терийех сурса пӑрахатӑн. Ак. Чим-ха, ку сан тапак та мар вӗт. Мӗскер ку? Шӑна-и?

— Шӑна?!—тӗлӗнсе карӗ упӑшки.

Малашне мӗн пулатчӗ пуӆ те, анчах ӑна чӳречерен тепре килсе шаккарӗҫ. Арӑмӗ чӳрече умне пычӗ.

— Мӗн? ыйтрӗ вӑл.

— Кӑнцелере час пырать-и ҫав?

— Шӑлӑнать те,—терӗ упӑшки.

— Час пырать?—тесе йачӗ арӑмӗ.

Куҫма Кондратйӗв ҫак вӑхӑтра шӑлӑнса пӗтерчӗ те, арӑмӗнчен кӗпе пама ыйтрӗ.

— Мӗнле сана кашни ир кӗпе? Ҫӑвӑнма пӗлместӗн... Пулать ҫын та...—вӑрҫса пӑрахрӗ арӑмӗ. Ҫавӑн пек ҫав унӑн арӑмӗ, ытлашши иртӗнме памасть. А Куҫма йӑваш ҫын, ҫӑвартан ытлашши сӑмахсем тухса кайасран хӑрать. Сутӑн илмели йапала мар та, ҫапах...

Унӑн ирӗксӗрех кӗпе типӗнессе кӗтмеле пулчӗ. Унччен сахалтан та виҫӗ сехет иртрӗ. Вара вӑл тумланкаласа тирпейленкелерӗ те канцеӆарине тухса утрӗ.

Вӑл ҫитнӗ ҫӗре канцеӆари пушӑ. Унта председателпе ҫекретар анчах лараҫҫӗ.

Ҫӑвӑнса пӗтертӗн-и?— ыйтрӗ председател.

— Пӗтертӗм,—йӑл кулчӗ Куҫма.

— Епӗр те канашлӑва пӗтертӗмӗр.

— Епӗ пухӑнман та тесе тӑрап-ха.

— Кайа йултӑн.

Йулнӑ йулнах ӗнтӗ, вӑл пӗрер чикаркӑ турткаларӗ те кайала тухса утрӗ. Килне ҫитнӗ-ҫитмен ӑна татах чӳречерен килсе шаккарӗҫ. Вӑл татах кирлӗ пулчӗ иккен.

Хаӆхинче чӳрече патне вӑл хӑй пычӗ.

— Кооператива сана темӗскер тума чӗнеҫҫӗ,—терӗҫӗ тултан.

— Мӗнле темӗскер тума? Канашлама пуӆ?

— Ҫапла-и ҫав... Часрах.

— Йурӗ,—тесе йулчӗ Куҫма.

Ун чухне вӑл салтӑнса пӑрахайманччӗ. Ҫавӑнпа та ӑна тытса чараканни хаӆхинче нимӗн те пулмарӗ. Анчах, ҫук та ҫук, вӑл татах кайаймарӗ, чӑрмавӗсем ӑна тулта та пулин сыхласа тӑнӑ: крыӆца алӑкӗнчен Куҫмана хирӗҫ унӑн тусӗ Раман Михалчӑ кӗчӗ.

— Аван-и, Куҫма?—терӗ Раман.

— Аван-ха, Раман!—терӗ Куҫма.

Урӑх сӑмах хушмарӗҫ. Пӳрте кӗчӗҫ те лараҫҫӗ пӗрне пӗри пӑхкаласа. Сӑмах хутаҫҫисем иккӗшӗн те пушӑ. Ҫапла ҫур сехет иртерчӗҫ.

— Епӗ кооператива каймa тухваччӗ,—аран-аран сӑмах тупрӗ Куҫма.

— Вара?—пăхрĕ ун ҫине Раман.
— Вара есĕ килтĕн те халƌ ларатпăр-ха.
— Е-е!
Татах ларассĕ. Татах тепĕр ҫур сехечĕ шăвăнчĕ. Йулашкинчен вара, халиччен, ҫын килĕнче тесе, хăйусăрланса ларнă Раман Куҫмана тепĕр пӳртне кĕме сĕнчĕ те сĕтел ҫине пĕр йăлтăркка кăна, хăйсен каларăшле, шĕмпĕл-шĕмпĕл йапала кăларса лартрĕ. Кунпа сăмах чĕрĕлчĕ.
— Епĕ те ҫавăнта кайма тухнăччĕ,—терĕ Раман.—Анчах ĕнерхи пасар мухмăрне чĕртме кирлĕ. Унсăрăн йурамасӑ.
— Ҫапла, чĕртес пулаӑ ҫав,—ҫирĕплетрĕ Куҫма.—Епĕ те ун пирки пайан темтепĕр курса пĕтрĕм.
Пĕрер черккине йарсан, Рамана вăл пайан мĕн курнине пĕр суймасăр каласа кăтартрĕ.
— Суйатăн пулƌ?—ĕненмерĕ Раман.
— Чăнах вĕт, тапак тесе чернил кĕленчине чиксе йанă. Мухмăру-масару тата тем курса тăрăн... Тавай ĕҫер!
— Ĕҫер ҫав.
Тата мĕн калаҫаӑчĕҫ-ши кĕсем? Итлесе тăма пулмарĕ, авă татах чӳречерен шаккаҫҫĕ.
— Мĕн?—терĕ Раман, чупса пырса. Куҫма ҫав вăхăтра сĕтел ҫинчи ăпăр-тапăрсене пуҫтарчĕ.
— Раман, есĕ те кунта-им?—палларĕҫ ăна тултан.
— Е, кунта та-ха. Мĕн тумала пулаӑ?
— Сана шыра-шыра пайан... Сире иксĕре те колхоз правленине чĕнеҫҫĕ.
— Е, йурĕ, пырăпăр,—тесе йулчĕ вăл. Тата, Куҫма ҫине пăхса:—часрах ĕҫер еппин, кайăпăр вара,—тесе хучĕ.
— Ну-и тарăхтараҫҫĕ!—терĕ Куҫма.—Пирĕнсĕр нимĕн тăваймаҫҫĕ. Пур ҫĕре те ҫит, пур ҫĕре те ĕлкĕр. Пайан вĕт миҫе ҫĕре чĕнчĕҫ ĕнтĕ. Тав ĕҫ!—терĕ вăл ҫав хушăран, Раман Михалчă „тав сана!" тесе хурсан.
— Ĕҫкеле те ҫакна, кайăпăр...—терĕ Раман.—Вăл чăнах та ҫав, пирĕнсĕр нимĕн тăваймаҫҫĕ...
Тухайаӑчĕҫ-ши вĕсем пайан, йе ҫаплипех сӳтĕлсе йулаӑчĕҫ, йешĕл крыƌца ҫинче пĕчĕк ура сасси илтĕнмен пулсан. Халƌхинче ăна канцеƌарине чĕнме килмерĕҫ, халƌхинче ун патне хăй йăмăкĕн хĕрĕ кĕрсе тăчĕ те каларĕ:
— Сана, кукка, атте мăкриччи ĕҫме чĕнет!
Куҫма Кондратйĕв кĕрӳшĕпе аван пурăнаӑ. Кĕрӳшĕ те йуратаӑ ăна, унсăрăн нихăҫан та пĕр черкке ерех ĕҫмест.
— Мĕнле мăкриччи тата?—ыйтрĕ Куҫма.
— Пăру пусрĕҫ.
— Пăру? Вот инкек.
— Выƌăха пĕтереҫҫĕ. Анчах мăкриччине ĕҫе[с] пулаӑ,—терĕ Раман.—Кайăпăр еппин.
Вара мăкриччи ĕҫме кайрĕҫ вĕсем. Ĕҫеҫҫĕ „Пуҫсана сывлăх пултăр, мулсана — перекет!" —тесе ĕҫеҫҫĕ пуснă пăрушăн. Сĕтел тулли кака[й] та ӳпке-пĕвер,—ҫи кăна! Ҫийеҫҫĕ. Сĕтел тулли ерех те кăрчама,—ĕҫ кăна! Ĕҫеҫҫĕ. Канашлу му[р] ҫине каймĕ, вăл татах пулаӑ-ха...
Каҫхине Куҫма килне вилӳсĕр таврăнчĕ. Арăмн[е] вăрҫтаркаларĕ, ытлашши сăмахĕсене те хĕрхенс[е] тăмарĕ. Шакканă сасă илтрĕ вăл. Чӳрече йенн[е] пăхрĕ те:
— Кам?—терĕ Куҫма.—Ӑфу! Каллех канашлу-и Мансăр пуҫне ним те тăваймаҫҫĕ пулаӑ.
— Никам та ҫук-ҫке,—терĕ арăмĕ.—Кушак ҫе[р] шаккаӑ ăна... Сĕтел айĕнче хыҫаланаӑ.

**Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ.** **Зам. отв. редакт. В. ЯКОВЛЕ[В]**
Сдано в производство 13/XII-1938 г. Подписано к печати 16/I-1939 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 11. Заказ № 8[..]
Формат бум. 58×83 1/8. Об'ем 2 п. л. Тираж 4500 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ", г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАСС[Р]

Пĕр № хакĕ 40 пус.

